Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 декабĕр 2 ернекун 276(5089) №

Чăваш Коммунĕ

21-мĕш çул тухат. ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн хаçачĕ. Пĕр №-рĕ 10 пус.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом Печати.

ТЕЛЕФОНСЕМ: редактăрăн — 0—67, ред. заместителĕн—3—97, редакци секретарĕн—4—40, парти пурнăç пайĕн—7—97, йалхуçалăх пайĕн — 4—97, советсен пайĕн—0—88, промышлĕннăç пайĕн—0—85, йалкорсен пайĕн—2—30, дежурнăйĕн — 6—23.

Информацилĕ пĕлтерӳ

1938 çулти нойабĕрĕн 28—30-мĕшĕсенче ПСК(б)П Чăваш организацин 19-мĕш созыври Обкомĕн II-мĕш Пленумĕ пулса иртрĕ.

Пленум çак ыйтусене сӳтсе-йаврĕ:

1. ПСК(б)П Канаш райкомĕн отчочĕ.
2. Государствă умĕнчи обйазателствăсене тата финанс планне тултарасси мĕнле пыни çинчен.

Çак ыйтусем тăрăх Пленум тивĕçлĕ решенисем йышăнчĕ.

Пленумра ПСК(б)П райкомĕсен çекретарĕсем тата райĕçтăвкомсен председателĕсем пулчĕç.

Пленум, ПСК(б)П Чăваш организацин 18-мĕш созыври Обкомĕн 1938 çулти февралĕн 22—24-мĕшĕсенче пулса иртнĕ V-мĕш Пленумĕн решенине, ПСÇЛКС представителĕ Мишаковă йулташ комсомолăн облăçри XIV-мĕш конференцинче хăйне мĕнле тыткаланине сивлекен, ПСК(б)П Обкомĕн кивĕ, тăшманла руководстви сĕтĕрсе кĕртнĕ решенине, халăх тăшманĕсене хӳтлекен тата комсомолри политикăлă сыхăлăха мăкатакан решенине, вăл партине хирĕçле решени тесе, пăрахăçа кăларчĕ.

ПСК(б)П Чăваш Обкомĕ.

ПСК(б)П Тĕпкомĕн постановленине болђшевикла пурнăçа кĕртессишĕн

„ПСК(б)П Историйĕн Кĕске курсĕ" тухнă май парти пропагандине йĕркелесси çинчен" ПСК(б)П Тĕп Комитечĕ йышăннă постановлени тухнăранпа вара вăхăт чылай иртрĕ. Вăл постановление районсенчи парторганизацисен пухăвĕсенче сӳтсе-йаврĕç. Халĕ пуçламĕш парторганизацисенче сӳтсе-йаваççĕ. Коммуниссем тата партире тăман болђшевиксем Парти Тĕпкомĕн çак постановленине питĕ пысăк хаваслăхпа йышăнса илчĕç, ăна пурнăçа кĕртме тытăнчĕç.

ПСК(б)П Тĕпкомĕ. Сталин йулташ пирĕн партине, комсомола, совет интеллигенцине марксисăм-ленинисăм теорипе хĕçпăшаллантармалли, пирĕн кадрсем теори тĕлĕшĕнчен кайа йулнине пĕтермелли хăватлă орудине — „ПСК(б)П Историйĕн Кĕске курсне" пачĕç.

„ПСК(б)П Историйĕн Кĕске курсĕ" тухни пирĕн партин идейăллă пурнăçĕнче питĕ пысăк событи пулса тăрат. ПСК(б)П Историйĕ коммуниссене, комсомолĕçсене, совет интеллигенцине марксисăм-ленинисăм теорипе хĕçпăшаллантарас задачăна татса памалли чи кирлĕ средствă пулса тăрат.

„ПСК(б)П Историйĕн Кĕске курсĕ" тухнă май парти пропагандине йĕркелесси çинчен" Тĕпком йышăннă постановлени хамăрăн кадрсене марксисăм-ленинисăм теорипе хĕçпăшаллантармалли; парти пропагандине организацилемелли çулйĕре тĕплĕн кăтартса панă. Парторганизацисен хисеплĕ задачи халĕ çак постановленине пурнăçа кĕртсе марксисăм-ленинисăм пропагандине болђшевикла организацилесси, ку ĕçре халиччен пулса пынă çитменлĕхсене: кустарщинăна, организацисĕрлĕхе, пропагандă çине çиелтен пăхнине хăвăрт пĕтересси пулат.

Парти организацийĕсем умĕнче питĕ те пысăк тата хисеплĕ задачă тăрат. Вĕсен партин пур членĕсене те, комсомолĕçсене, совет интеллигенцине марксисăм-ленинисăм теорине вĕренсе, хăйсен теорилĕ пĕлӳне ӳстерме пулăшмала.

Çак задачăна пурнăçа кĕртес пулсан, парти организацисен парти пропагандине Тĕпком постановленийĕ хушнă пек урăхлатса çĕнетмеле. Урăхлатса çĕнетес тени вăл чи малтан марксисăм-ленинисăм пропагандин пахалăхне ӳстерессине пĕлтерет. Парти Тĕпкомĕ хăйĕн постановленийĕнче хамăрăн кадрсене кружоксем урлă çеç болђшевисăма вĕрентме хăтланнă метăда питĕ хытă сивлет, ку ĕçе мĕнле организацилемеллине вĕрентет. Парти организацисен Тĕпком постановленине пурнăçа кĕртсе, халиччен организациленĕ кружоксене сахаллатмала, виçĕ тĕрлĕ кружоксем тумала, кружоксене слушателсене хăйсен ирĕкĕпе çеç пĕрлештермеле. Анчах та çак ĕçе нумай организацисем тума тытăнман-ха (Шупашкар, Куславкка, Çĕрпӳ т. ыт.).

ПСК(б) Тĕпкомĕн постановленийĕ пропагандиссен теорилĕ пĕлӳне ӳстерес задачăна çивĕччĕн лартат. Халĕ ĕнтĕ пропагандиссен рођĕ питĕ хытă ӳсет. Ĕлĕк пропагандис парти историне вĕрентнĕ чухне час-часах историлĕ фактсене каласа панă пулсан, халĕ унăн çав историлĕ фактсене марксисла-ленинла ăнлантарса памала. Ку ĕнтĕ парти райкомĕсене пропагандă ĕçне тума чи шанчăклă, политика тĕлĕшĕнчен тĕрĕсленнĕ, марксисăм-ленинисăм теорипе хĕçпăшалланнă йулташсене суйласа илме хушат. Анчах та пайанхи куна парти райкомĕсенчен нумайĕшĕ пропагандиссен кадрĕсене пухса çитермен, вĕсене лайăх тĕрĕслемен. Ку ĕнтĕ парти пропагандине анлăн сарма питех те чăрмантарат. Çавăнпа ку ĕçе вăраха йама кирлĕ мар.

Парти пропаганди ĕçĕнче Маркс—Еньгеђс—Ленин—Сталин произведенисене, ПСК(б)П историне харпăрхăй тĕллĕн вĕренесси тĕп вырăнта тăрат. Парти райкомĕсен, Шупашкар хула комитечĕн харпăрхăй тĕллĕн вĕренекенсене пысăк пулăшу памала. Вĕсене ПСК(б)П историйĕ, марксисăм-ленинисăм теорийĕн ыйтăвĕсем тăрăх, тĕнчери лару-тăру çинчен лайăх лекцисем туса памала, консуђтацисем туса иртерме тытăнмала. Халĕхе ку ĕçе парти райкомĕсем нумайĕшĕ чăннипех тытăнман-ха. Районсенчи пухусенче коммуниссем парти райкомĕсенчен Тĕпком постановленине пурнăçа кĕртсе, харпăрхăй тĕллĕн вĕренекенсене конкретлă пулăшу пама ыйтни питĕ вырăнлă. Парти райкомĕсен лекцисемпе консуђтацисене иртерме чи квалификацилĕ работниксене çеç хутшăнтармала. Пысăк пахалăхлă консуђтаци, кирлĕ канаш, мĕнле кĕнеке вуламаллине каласа памала, ăнланман ыйтусене ăнлантарса памала. Çакна ыйтаççĕ коммуниссем, комсомолĕçсем, совет интеллигенцийĕ пирĕн консуђтантсемпе лектăрсенчен. Çакна организацилемеле парти комитечĕсен.

Парти историне вĕренекенсене парткабинетсем те пысăк пулăшу памала. Акă, Тăвай, Çĕрпӳ районĕсенчи парткабинетсем ПСК(б)П историне тарăннăн вĕренме тытăннă вăхăтра 1—2 уйăх хупă лараççĕ. Кусем парти райкомĕсем вĕсем çине çиелтен пăхни çинчен калаççĕ. Парткабинет вăл кĕнеке вуламалли вырăн çеç мар, унта парти членĕ, комсомолĕç, совет интеллигенчĕ хăй ăнланман теорилĕ ыйтусем тăрăх ответ илме пултартăр. Парти райкомĕсен парткабинетсене квалификацилĕ кадрсемпе çирĕплетмеле. Пысăк квалификацилĕ пропагандиссен вăйĕпе ушкăнлă тата уйрăм çынсене консуђтаци парас ĕçе йĕркелемеле.

Совет интеллигенцийĕпе малта пыракан рабочисен тата колхозниксен ПСК(б)П историне тарăннăн вĕренес интерес пысăк.

Парти организацисен совет интеллигенцийĕ çине йĕрĕнсе, хулиганла пăхассине пĕтĕмпех пĕтермеле. Интеллигенци хушшинче, хамăрăн кадрсем хушшинче политикăлă ĕçе вăйсăрлатни, троцкисла-бухаринла тата буржуалă-националисла бандăсемшĕн усăллă пулнине асра тытмала.

Парти пропагандине сарас ĕçре пирĕн пичет питĕ пысăк вырăнта тăрат. Республикри, районсенчи хаçатсем умĕнче те халĕ пысăк ĕçсем тăраççĕ. Парти райкомĕсен районсенчи хаçатсен редакцисенче ĕçлекенсене квалификацилĕ, ĕçре тĕрĕсленнĕ кадрсемпе çирĕплетес тĕлĕшпе нумай ĕçлемеле.

„ПСК(б)П Историйĕн Кĕске курсĕ" тухнă май парти пропагандине йĕркелесси çинчен" ПСК(б)П Тĕпкомĕ йышăннă постановленине пурнăçа кĕртсе, марксисăм-ленинисăм пропагандине болђшевикла организацилесси партин кашни организацин, кашни комитечĕн, кашни руководителĕн чи хисеплĕ задачи пулат.

Совет Сойузĕпе Пољшă хушшинчи хутшăнусем çинчен пĕлтерни пирки Америкăра мĕн çыраççĕ

ЊЙУ-ЙОРК, нойабĕрĕн 29-мĕш. „Њйу-Йорк таймс" хаçат вăл пĕлтерĕве: „Пољшă Совет Сойузĕпе туслă пулассине çирĕплетсе пырат" текен заголовăк парса пичетленĕ.

„Гераљд трибун" хаçатăн Мускаври корреспонденчĕ Барнес çапла çырат: „Совет Сойузĕпе Пољшă хушшинчи калаçусем çакна кăтартса параççĕ: Хĕвелтухăç Йевропăна Германи орбити çине кĕртесси пĕрре те Мӳнхĕнри килĕшӳ хыççăн кĕтсе тăнă пек çăмăл пулманни палăрчĕ". Малала Барнес: калаçусем Пољшă пуçарнипе пуçланнă, тесе паллă тăват.

(ТАСС).

Францире чрезвычайнăй декретсене протестлесе тунă пĕтĕмĕшлĕ забастовкăсем

Еççыннисем хушшинче чрезвычайнăй декретсене хирĕç пуçланнă йухăма путарса лартас шутпа, Франци правителстви халăха хăратса тата çар йĕнĕпе мерăсем йышăннă пулсан та, нойаберĕн 30-мĕшĕнче Францире пур çĕрте те пуçласа йама палăртса хунă забастовка промышлĕннăçлă центрсемпе рабочисем йышлăн пурăнакан районсенче ăнăçлăн пулса иртнĕ. Забастовкăсем уйрăмăнах Францин çурçĕр пайĕнчи промышлĕннăçлă районĕсенче ăнăçлăн иртнĕ.

Забастовкăна металлиссем, докерсем, морйаксем, строителсем, горђаксем, хăма савăчĕсенче ĕçлекенсем, кожевниксем, атă-пушмак промышлĕннăçĕнче ĕçлекенсем, химиксем, йувилер промышлĕннăçĕнчи рабочисем, текстиђщиксем т. ыт. те хутшăннă.

Марсеђри рабочисем пурте забастовкăна тухнă. кунта забастовкă пĕтĕм рабочисен забастовки пулса тăнă. Çавăн пекех пĕтĕмĕшлĕ забастовкăсем Çурçĕр департаменчĕнче тата Клермон Ферранра пулнă.

Лилл хулинче пĕтĕм горнорабочисем, текстиђщиксем, металлиссем т. ыт. забастовкă тунă, çавăн пекех забастовкăна пожарниксемпе государствă учрежденисенче ĕçлекен работниксемсĕр пуçне, муниципалитетсенчи пур служăщчисем те хутшăннă. Дункерк хулинче газ савăчĕсемпе електростанци рабочисем, çавăн пекех муниципалитет транспăртĕнче ĕçлекен рабочисем забастовкă тунă. Бордора трамвай çинче ĕçлекенсем забастовкă тунă.

Гавр, Булон т. ыт. портлă хуласенче забастовкăна докерсем пурте хутшăннă. Луар бассейнинче горђаксем пурте забастовкă тунă. Йавăр промышлĕннăçăн пысăк центрĕнче—Сант Етйенра та çавăн пекех пулнă. Валенçйенра 30 пин горђак забастовкă тунă. Валенçйен облăçĕнчи тимĕр-хурăç шăратакан савăтсенче пĕтĕм рабочисенчен 85 процент, текстиђпе хими промышлĕннăçĕнчи пĕтĕм рабочисенчен 80 процент. Авзенри çĕркăмрăк кăларакан вырăнсенче 65 процент забастовкă тунă.

Рабочи организацисем тăратакан туллимар сведĕнисем тăрăх, реквизици туман, уйрăм хуçасен промышлĕннăçĕнче горђаксем 100 процент, металлиссем 80 процент, текстиђпе хими промышлĕннăçĕнчи рабочисем 65 процент забастовкă тунă.

Реквизици тунипе правителствă Парижре хула транспăртне ĕçлеттерме пултарнă.

Франци провинцисенчен килекен сведĕнисем пурте забастовкăсем питех те ăнăçлă иртни çинчен калаççĕ.

Правителствă забастовкăсене хирĕç çар йĕнĕпе татăклă мерăсем йышăннă. Парижре пур вокзалсене те çарсем йышăнса илнĕ. Çавăн пекех Париж çывăхне те нумай çарсем илсе пырса тăратнă пулнă. Провинцисенче те çавăн майлах пулнă.

Лилре тата Тулузăра забастовкă тăвакан рабочисемпе полици хушшинче вăйлă тытăçусем пулса иртнĕ. Лилре забастовкă тăвакан рабочисем виçĕ трамвайа тытса чарнă, вожатăйсемпе пассажирсене вакунсем çинчен антарнă. Пĕтĕм района полиципе çарсем хупăрласа илнĕ. Полици забастовкă тăвакан рабочисене арĕслеме тăнă. Вара рабочисемпе полици хушшинче тытăçу пуçланса кайнă. Темиçе полицейскине амантнă. Нумай рабочисене арĕсленĕ.

Парижри Мон Парнас вокзалĕ патĕнче пикет организацилеме тăнă рабочисене 30 çынна арĕсленĕ.

Парижри Санта тĕрминче пур камĕрĕсене те, арĕсленĕ рабочисем нумайăн пуласса кĕтсе, малтанхи кунах уголовнăй ĕçпе ларакансенчен тасатнă.

Франци правителстви Францири профсойузсен руководителĕсене пурне те суда парса суд ĕçĕ пуçласа йама хатĕрленет.

* * *

Франци правителстви пĕтĕмĕшлĕ забастовкăна пĕтерсе лартас шутпа уйрăм хуçасем аллинче тăракан чылай шултра предприйатисемпе шахтăсене, çавăн пекех пĕтĕм чукунçулсене, хула транспăртне т. ыт. государствă пурлăхĕ тесе вăхăтлăха реквизици тунă, хăшпĕр чухне тата çар предприйатийĕсем туса хунă. Çапла вара çак предприйатисенче ĕçлекен рабочисемпе служăщчисем пурте хуçасем патĕнче ĕçлекенсем мар, государствă предприйатисенче ĕçлекенсем пулса тăнă.

Государствă предприйатисенче ĕçлекен рабочисене забастовкăна хутшăннăшăн правителствă пурне те ĕçрен кăларса йарассипе тата трибунал таранах суд умне тăратассипе хăратнă.

(ТАСС).

Фашисла погромщиксен тискер ĕçĕсем Совет çĕршывĕнчи интеллигенцине çиллентерсе тарăхтараççĕ

Пĕтĕм Совет çĕршывĕ тăрăх совет интеллигенции — Германири фашисла погромщиксен тискер ĕçĕсене хирĕç тарăхса çиллеьекен совет интеллигенцин нумай пин çынлă митингĕсем пулса иртеççĕ.

Нойабĕрĕн 29-мĕшĕнче Бакура писателсем, учонăйсем, врачсем, художниксем, педагогсем, архитектăрсем—пурĕ 1.500 çын ытла пĕтĕм хулари митинга пухăннă, вăл митинга совет писателĕсен сойузĕпе совет композитăрĕсен сойузĕн правленийĕсем пухнă.

— Фашисла изуверсен йунлă ĕçĕсем пирĕнте мĕн тери вăйлă курайманлăх, çилĕ çĕкленине сăмахпа каласа пама та май çук,— тенĕ физика профессăрĕ Усатый.— Пайан Германире пулса иртекенни вăл—йунлă фашисăм вилес умĕн турткашни пулса тăрат.

ССР Сойузĕн халăх артисĕ композитăр Узеир Гаджибекăв хăй сăмахĕнче çапла каланă:

— Фашисла погромщиксен емблеми—пуртă, çутă идейă тытса çӳрекен пуççене касса пăрахакан пуртă. Епĕр, совет интеллигенцийĕ, пĕтĕм тĕнчери малта пыракан интеллигенцине фашисăма хирĕç кĕрешме чĕнетпĕр.

Дон-çи-Ростов хулинчи совет интеллигенцин 20 пин çынлă митингне наукăн тава тивĕçлĕ деятелĕ К. Орлов профессăр уçнă.

— Епĕр, социалисăмăн хăватлă çĕршывĕн телейлĕ граждăнĕсем,— тенĕ Орлов профессăр,—пĕтĕм совет интеллигенцийĕ тата пĕтĕм куђтурăлă етемлĕх, хӳтлĕхсĕр йеврей халăхне асаплантаракан Германи фашисăмĕн тискер ĕçĕсене хирĕç чĕререн çиллесе тарăхатпăр. Фашисла ирсĕрсене, çынвĕлеренсемпе çынçийенсене курайманлăхпа пиглетпĕр.

Хăйĕн пĕр саслăн йышăннă резођуцийĕсенче Советсен çĕршывĕн интеллигенцийĕ фашисла палачсене—йеврейсене хирĕç погромсем тунинче çăлăнăç тупма хăтланакан çынвĕлеренсене çилленсе тарăхни çинчен калат. (ТАСС).

Венгрин йут çĕршыв ĕçĕсен министрĕ отставкăна тухнă

ПРАГĂ, нойабĕрĕн 29-мĕш. Венгрин йут çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Канийа отставкăна тухнă. Йут çĕршыв ĕçĕсен министерствине йертсе пырас ĕçе премйер-министр Имреди вăхăтлăха хăй çине илнĕ.

Испани ачисем Совет Сойузне килеççĕ

„Феликс Дзержинский" теплоход çине республикăлă Испанирен Совет Сойузне килме тухнă Испани ачисем нумайăн ларнă.

„Феликс Дзержинский" теплоход Ленинграда декабĕрĕн 4—5-мĕшсенче çитмеле.

(ТАСС).

Нойабĕрĕн 17-мĕшĕнче ССРС Верховнăй Совет Президиумĕн Председателĕ М. И. Калинин Совет Сойузĕн Геройĕсене—кĕçĕн командира Н. М. Баринăва тата 2-мĕш рангри çар врачне Б. П. Бегоулĕва, Хĕрлĕ Çар бойецĕсен, командирĕсен тата политработникĕсен группине ордĕнсем панă.

Ӳкерчĕк çинче: Хасан кӳлли районĕнчи çапăçусенче пулнисен группи, вĕсене ССРС ордĕнĕсемпе наградăланă. Сулахайран сылтăмала: малти ретре—лейтенант Б. З. Урецкий, майор И. М. Жукăв тата полк комиссарĕ И. П. Куликов, хыçалти ретре—аслă политрук Й. И. Синденко тата кĕçĕн лейтенант М. Н. Семериков.

С. Лоскутов фото-ӳкерчĕкĕ (Сойузфото).

С. М. Кирăва асăнса

Фашисăм тарçисем тискеррĕн вĕлерне Сергей Миронăвич Кирăва нумай мĕлйунлă пĕтĕм совет халăхĕ ĕмĕр асра тытат.

Çулăмлă болђшевикăн таса йатне асăнса çĕршыври предприйатисенче, колхозсенче, совхозсенче тата учрежденисенче нумай пухусем пулса иртеççĕ.

Çак кунсенче Ленинградри С. М. Кирăв музейĕн залĕнче—вĕçĕ-хĕрри сĕр халăх. Кунта пурте партин тата пĕтĕм совет халăхĕн йуратнă ывăлĕ çинчен калаççĕ. Ленинградри ĕççыннисемпе пĕрле унта Совет Сойузĕн пур кĕтесĕсенчен те килнĕ ĕççыннисем пыраççĕ.

Çак кунсенче музейе йут çĕршывсенчи рабочисен делегацийĕсем пырса курнă. Музейрен тухнă чух Испани делегацийĕ отзывсен кĕнеки çине çапла çырса хăварнă:

„Октăбĕрти революци XXI çул тултарнă куна уйавлама Испанирен килнĕ делегаци, Ленинградри Кирăв музейĕнче пулнă хыççăн, музейĕн чаплă експозицине паллă тăват. Çак пысăк та чаплă революционер çинчен, предателсен—троцкиссен ирсĕр рођне музей пит лайăх кăтартса парат".

Сергей Миронăвич Кирăвăн мухтавлă йатне панă „Динамо" савăтăн (Мускав) цехĕсемпе бригадисенче пропагандиссемпе агитатăрсем С. М. Киравăн пурнăçĕ, революцилĕ ĕçĕ çинчен калаçусем туса иртереççĕ, вĕсем савăтри рабочисене Сергей Миронăвичăн чаплă сăмахĕсемпе статйисене вуласа параççĕ. Савăтра пысăк выставкă организациленĕ, вăл выставкă документсемпе фотографисем тăрăх, пысăк та чаплă болђшевикăн, социалисăмлă революци трибунĕн революцилĕ çутă çулне кăтартса парат.

Кирăвра, Минскра, Орджоникидзере тата ССР Сойузĕн ытти хулисенче те Кирăв çинчен каласа паракан выставкăсем уçăлнă.

(ТАСС).

Мускаври парти активĕн районри пухăвĕсем

Нойабĕрĕн 27, 28, 29-мĕшĕсенче Мускав районĕсенче парти активĕн пухăвĕсем пулса иртнĕ, пухусенче ПСК(б)П Тĕпкомĕ „ПСК(б)П Историн Кĕске курсне" кăларнă май парти пропагандине йĕркелесси çинчен" йышăннă постановленине сӳтсе-йавнă.

Кирăв районĕнчи партактив пухăвĕнче пренире тухса каланисем уйрăмăнах парти кабинечĕсен ĕçĕсем, лекцисемпе консуђтацисем организацилесси çинчен чарăнса тăна.

Краснопресненски районĕнче инженерлă-техниклă работниксем виçĕ пин çын ытла, пиншер служăщчисем, 1200 йахăн учителсем, 500 йахăн врачсем ĕçлеççĕ. Апла пулсан та, парти организацисем йулашки вăхăтсенче тин çак интеллигенци хушшинче ĕçлесси çине кирлĕ пек пăхма пуçлана.

Пренире тухса калакансем ПСК(б)П Тĕпком постановленине пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе чылай практикăлă сĕнӳсем пана.

(ТАСС).

Мускав комсомол активĕн пухăвĕ хупăннă

Нойабĕрĕн 29-мĕшĕнче ПСÇЛКС Мускав организацин пухăвĕ хупăннă, пуху виçĕ куна пынă. Пренире тухса каланă йулташсем ПСÇЛКС Мускав комитечĕпе Мускав хула комитет çекретарĕсене—Александрăв, Йежов, Йефремăв, Тӳфайĕвă йулташсене политика тĕлĕшĕнчен панкрута тухнă Косарĕв, Вершков хыççăн пынăшăн айăплана, вĕсем пур майсемпе те айалтан çĕкленекен болђшевикла критикăпа самокритикăна хĕснĕ, хăйсен политикăлă пысăк йăнăшĕсене йышăнасшăн пулман.

Актив, ПСÇЛКС Тĕпком çекретарĕ Мишаковă йулташ тухса каланине пысăк тимлĕхпе итленĕ. Мишаковă йулташ ПСÇЛКС Тĕпком руководствинче пулнă çынсен болђшевисăма хирĕçле ĕçĕсем çинчен каласа панă. Çавăн пекех вăл унăн хăйĕн халăх тăшманĕсемпе вĕсене хӳтлекенсене хирĕç мĕнле кĕрешмеле пулни çинчен каласа панă.

Актив пухăвĕнче ПСК(б)П Мускав хула комитет çекретарĕ Попов йулташ тухса каланă.

Пурте пĕр саслă пулса йышăннă резођуцире актив ПСÇЛКС Тĕпкомĕн VII-мĕш пленум решенисене пĕтĕмпех ырлана.

Пысăк хаваслăхпа актив Сталин йулташ патне салам йама йышăннă.

(ТАСС).

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

ПСК(б)П Тĕпкомĕн постановленине пурнăçа кĕртер

Тутаркас районĕнчи пуçламĕш партиорганизацисенче пуринче те ПСК(б)П Тĕпкомĕ „ПСК(б)П историйĕн Кĕске курсне" кăларнă май партилĕ пропагандă ĕçне йĕркелесси çинчен" йышăннă постановленине тĕплĕн сӳтсе-йаврĕç. Ку ыйтупах нойаберĕн 23-мĕшĕнче коммуниссен районри пухăвĕ пулса иртрĕ.

Пухура коммуниссем нумай тухса каларĕç. Тĕпком постановленине пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе тумали конкретлă ĕçсене кăтартса пачĕç.

— ПСК(б)П Тĕпкомĕн постановленийĕ историлĕ вырăн йышăнаť. Вăл партилĕ пропагандă ĕçĕнче ку таранччен пулса пынă пысăк çитменлĕхсене тĕп тăваť. Коммунисене, комсомолĕцсене тата совет интеллигенцине болъшевисăмпа хĕçпăшаллантарса, епĕр теори тĕлĕшĕнчен кайа йулнине пĕтерет,—тет Гаврилăв йулташ.

ПСК(б)П Тĕп Комитечĕн постановленийĕ партилĕ пропагандăна пичет урлă туса пырассине татăклăнах вăйлатма хушаť. Анчах парти Обкомĕ кăларакан „Ленин çулĕпе" журнал халъ коммуниссен, комсомолĕцсен, совет интеллигенции теорилĕ пĕлӳне хăпартма пулăшмасť. Çитменнине журнал йĕркелĕ тухса тăмасť. Çакăн çинчен те каларĕç коммуниссем.

Халĕ ĕнтĕ районти „Ĕç йалавĕ" хаçатăн та парти пурнăçне, çавăн пекех партилĕ пропагандă ыйтусене çутатассине нумай лайăхлатмала. Хаçат ĕçне райком çекретарĕсен, инструктăрĕсен, пропагандиссен, парторгсен активлăн хутшăнса ĕçлемеле. Çапла пулин те пирĕн районти партактив хаçат ĕçне çителĕксĕр хутшăннă. Парти Тĕпкомĕн постановленийĕ çак çитменлĕхе те пĕтерме хушаť.

Парти Тĕпкомĕн постановленинче кăтартнă çитменлĕхсем пирĕн районта та пулнă. Кăçал епĕр кружоксем хыççăн кайса, парти историне вĕренме тесе йалсенче 15 кружок, район центрĕнче 4 кружок тунă. Кружоксене йертсе пыракан пропагандиссем хушшинче хăйсем те парти историне тин вĕренекеннисем пулнă. Çакă ĕнтĕ епĕр харпăрхăй тĕллĕн ĕçлессине хак памании, пропагандиссен кадрĕсем çине тимлĕн пăхманни çинчен калаť. Ку йанăша тӳрлетме парти Обкомĕн партилĕ пропагандăпа агитаци пайĕ те пире вăхăтра пулăшу памарĕ.

ПСК(б)П историйĕ—кĕрешӳсемпе çĕнтерӳсен, марксисăм-ленинисăм тăшманĕсене çапса аркатнин историйĕ. Çавăнпа та пирĕн районри коммунисем, комсомолĕцсем, совет интеллигенцийĕ çак чаплă кĕрешӳсемпе çĕнтерӳсен историне пысăк хаваслăхпа вĕренесшĕн çунаççĕ. Анчах та КОГИЗ „ПСК(б)П историйĕн Кĕске курсĕ" кĕнекине çителĕклĕ илсĕ килменнине пула коммуниссем нумайĕшĕ учебник туйанайман.

Районри парткабинетăн хăйĕн ĕçне нумай çĕнетмеле. Парти членĕ Киçелъов йулташ парткабинета кăнтăрла хыççăн 4 сехет иртсен те ĕçлеттерсе. Ĕç пĕтнĕ хыççăн вĕренме услови туса пама хушаť. Ку тĕрĕс. Халĕ парткабинет кăнтăрла иртсен час-часах хупă тăраť. Коммуниссем парткабинетра лекцисем, консулътацисем организацилес ĕçе çивĕччĕн кăларса тăратрĕç.

ПСК(б)П Тĕпкомĕн постановленине пурнăçа кĕртсе коммуниссене, комсомолĕцсене, совет интеллигенцине болъшевисăмпа хĕçпăшаллантарса, хамăр кадрсем теори тĕлĕшĕнчен кайа йулнине пĕтересси парти райкомĕн тĕп задачи пулаť.

Бирӳков.

ПСК(б)П Тутаркас райкомĕн çекретарĕ.

Чукунçул станцинчи парторганизацире

Хусан чукунçулĕн Канаш станцинчи пуçламĕш парторганизаци пĕчĕк мар. Унта парти членĕсемпе кандидатсем 21 çын, сочувствуйушчисен группинче 8 çын тăраť. Кăçал парти ретне 4 çынна илнĕ.

Партком парти членĕсемпе кандидачĕсене политикăлă воспитани парас ĕçре—ПСК(б)П историйĕн Кĕске курсне вĕрентесси тĕп вырăн йышăнса тăраť, тесе шутлаť. ПСК(б)П историйĕн Кĕске курсĕ хаçатсенче пичетленсе тухма тытăнсанах коммуниссем унпа малтанлăха паллашрĕç. Халĕ ĕнтĕ нумайĕшĕ харпăрхăй тĕллĕн вĕренме тытăнчĕç. ПСК(б)П членĕ Герасимăв йулташ парти истории учебникне вĕреннĕ чухне Марксăн, Енгелъсăн, Ленинăн тата Сталинăн уйрăм произведенисене вуласа усă кураť, ПСК(б)П историне тарăн вĕренет. Коммунис Кудрйашов йулташ та ПСК(б)П историне хăй тĕллĕн вуласа вĕренет. Парторганизацинчи ытти коммуниссем те болъшевиксен партин чаплă историне пысăк хаваслăхпа вĕренеççĕ. Тӳрех калас пулаť, ПСК(б)П историйĕн Кĕске курсĕ тухни коммуниссен марксисăм-ленинисăм теорине вĕренес хастарлăхне, марксисăм-ленинисăм класçикĕсен кĕнекисене харпăрхăй тĕллĕн вуласа вĕренес интересне нумай çĕклерĕ. Уйрăмах, парти Тĕп Комитечĕ çак çулти нойаберĕн 14-мĕшĕнче йышăннă постановлени партилĕ пропагандă мĕнле пулмалине кашни коммуниса тĕплĕн ăнлантарса пачĕ.

Партком сочувствуйушчисене партилĕ ĕçе хутшăнтараť. Ку ĕçе партком çекретарĕ хăй туса пыраť. Вăл сочувствуйушчисене вĕсем хăш ĕçе тума пултарнине курă ĕç параť, вĕсене пурнăçа кĕртнине тĕрĕслет. Арекейĕв йулташа станцăра хĕллене хатĕрленес ĕç мĕнле тăнине тĕрĕслеме хушнă. Вăл партком хушнă ĕçе вăхăтра туса, станцă хĕллене мĕнле хатĕрленнине тĕплĕн тĕрĕслесе тухнă. Арекейĕв йулташ хăйĕн политикăлă пĕлӳне хăпартасшăн тăрăшаť. Вăл „Гудок" тата „Локомотив" хаçатсене çырăнса илсе вулаť, унăн хăйĕн пĕчĕк библиотекă пур. Вăл стахановец, нормăна 150—180 процент тултараť. Ытти сочувствуйушчисем те партилĕ ĕçе хутшăнса ĕçлеççĕ, хăйсен политикăлă пĕлӳне ӳстереççĕ. Вĕсене партком кирлĕ пулăшу параť.

Кунта политикăлă агитаци ĕçĕ те чылайах вăйланнă. Партком çумĕнчи агитколлективра 13 çын. Вĕсем рабочисем хушшинче политикăлă агитаци ĕçне туса пыраççĕ. Çапла, комсомолĕц Воронков йулташ хăйĕн çменинче ĕçлекен рабочисем хушшинче калаçусем туса ирттерет, хаçат-журнал вуласа параť. Партком агитатăрсене пухса малашне мĕн тумалине вĕрентет, лайăх ĕçлекен агитатăрсен опытне сараť. Партком пухнă канашлура агитатăрсем пĕр-пĕрин ĕçĕпе паллашни, политикăлă агитаци ĕçне куллен лайăхлатма нумай пулăшаť.

Парторганизаци стахановла йухăма сарас тĕлĕшпе ĕçлени çакăнтан лайăх курăнаť. Август уйăхĕнче стахановецсем 80, ударниксем 48 çын пулнă. Халĕ стахановецсем 129, ударниксем 79 çын. Анчах та парторганизаци производствăри чи лайăх стахановецсене парти ретне илес тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлет. Стахановецсемпе ударниксем çакăн чухлĕ пулин те, сочувствуйушчисен группинче 8 çын çеç. Çавăн пекех партком совет интеллигенци хушшинче çителĕксĕр ĕçлет.

Парти кандидачĕ Овчинникăв, парти членĕ Журкин йулташсем партилĕ ĕçрен айакра тăни, хăйсен политикăлă, теорилĕ пĕлӳне хăпартассишĕн нимĕн те тăрăшманни парторганизацинче дисциплинăна çирĕплетме кирли çинчен калаť.

Йефимăв.

Ленинăн вилĕмсĕр ĕçĕ

(„Что такое „друзья народа" и как они воюют против социал-демократов?" йатлă кĕнеке)

I.

Маркс вĕрентĕвĕн, — тесе çырнă Ленин „Марксизм и ревизионизм" йатлă статйара, — „пурнăç çулĕ çинче хăйĕн кашни утăмнех çапăçса илмеле пулнă". Хăй Росçийăра сарăлма пуçланă малтанхи утăмсенченех марксисăма марксисăмăн тăшманĕсене — народниксене хирĕç хайаррăн кĕрешме тивнĕ. Росçийăра марксисăма сарас çул çинче народниксем идейă тĕлĕшĕнчи чи пысăк чăрмав пулса тăнă. Народниксем рабочи класа организацилес ĕçе, унăн партине туса хурас ĕçе чăрмантарса тăнă, ĕçсыннисен тимлĕхне революцилĕ кĕрешӳ çулĕ çинчен пăрса пынă, етемлĕх историйĕн аталанăвĕ çине пите те сийĕнлĕ, наукăна хирĕçле пăхассине аталантарса пынă.

Плеханăв 80-мĕш çулсенчех ĕнтĕ народничĕствăна тĕпрен çапса салатнă пулин те, çапах та народниксен йулашкисем революцилĕ йухăмри рабочи клас гегемонине хирĕç пырса, марксисăм çинчен тĕрлĕрен елеклесе, патша правителствипе тата Росçийăри пуç пулса тăракан експлоататăрла класçемпе килĕшме вĕрентсе, хăйсен реакцилĕ позицийĕсене хӳтĕлеме пăрахман.

Вырăс марксисĕсем умĕнче çакăн пек задачă тăнă: „марксисăма малала та сарса пыма тата социал-демократла партине туса хумали майсене тума народничĕствăна идейă тĕлĕшпе вĕçне çитиех çапса çĕмĕрмеле пулнă.

Ку ĕçе Ленин туса çитернĕ.

Хăйĕн „Что такое „друзья народа" и как они воюют против социал-демократов?" кĕнекинче (1894 çул) Ленин народниксен чăнчăн сăн-питне, вĕсем халăхăн суйа „тусĕсем" пулнине, чăннипе халăха хирĕç пынине вĕçне çитиех тăрă шыв çине кăларнă". („ПСК(б)П Историйĕ", стр. 20).

Ленин народничĕствăн реакцилĕ, малала мар, кайала пăхакан идейисене хирĕç марксисла теорин—вĕçне çитиех наукăлă теорин, обшчĕствăлă аталанăвăн саккунĕсене тĕрĕс палăртса паракан теорин, рабочи клас аллинче, ĕçсыннисен аллинче мобилизацилекен, организацилекен тата çĕнетсе улăштаракан хăватлă вăй пулса тăракан теорин аслă чăнлăхне кăларса тăратнă. Ленин хăйĕн вилĕмсĕр кĕнекинче вырăс марксисĕсен тĕп задачисене палăртса хунă, марксиссен сапаланчăк кружокĕсенчен пролетариатăн пĕрлĕхлĕ партине организацилеме чĕннĕ.

Хăйĕн „Что такое „друзья народа" йатлă гениле ĕçĕнче „Ленин рабочи класăн кĕрешӳ çулне тĕрĕс кăтартса панă, унăн ролъне—вăл обшчĕствăн малта пыракан революцилĕ вăйĕ пулса тăнине палăртнă, хресченсен ролъне—вĕсем рабочи класăн союзникĕ пулмалине палăртнă.

Ленин тата ун майлисем народничĕствăна хирĕç кĕрешни 90-мĕш çулсенчех народничĕствăна идейă тĕлĕшĕнчен тĕпренех çĕмĕрсе тăкни патне илсе çитернĕ". („ПСК(б)П Историйĕ", стр. 21—22).

Ленинăн кĕрешĕве мобилизацилекен революцилĕ кĕнеки творчĕствăлă марксисăмăн йар усă образецĕ пулса тăнă. Вăл вырăс марксисĕсен шăпах пĕр ăрувĕшĕн ĕç тумали руководствă пулса тăнă, тĕнчери коммунисла йухăмăн тимĕр фондне йаланлăхах кĕнĕ.

II.

Хăйĕн кĕнекине Ленин вăрттăн тата хăйĕн хушаматне кăтартмасăр кăларнă, патша Росçийĕн условийĕсенче урăхла тума та йураман, унчухне цензурă тата охранкă кашни ирĕклĕ сăмах хыççăн хăвалană, Ленинăн çак ĕçре марксисăмăн революцилĕ тупсăмне туллийĕн те тĕплĕн кăтартса памала пулнă.

„Что такое „друзья народа" кĕнекене гектограф çинче пичетлесе кăларнă тата вăл малтанах виçĕ кăларăмран тăнă. Анчах иккĕмĕш кăларăм пирĕн пата çитеймен. Пĕтĕм виçĕ кăларăмăн содержанине Ленин хăй çакăн пек каласа кăтартса панă. Пĕрремĕш кăларăмра народниксем „материалисăма хирĕç тата пĕтĕм марксисăма хирĕç" каланисене критиклесе, пăхса тухнă тата çапла тунипе Марксăн материалисла мировоззренине тата диалектикăлă метăдне анлăн характеристикă панă. Иккĕмĕш кăларăмра автăр народниксен „политикăлă-економикăлă теорийĕсене" критиклесе пăхса тухаť, вĕсене хирĕç марксиссен идейисене кăларса тăратаť. Виççĕмĕш кăларăмра Ленин, хăй калană сăмахсем тăрăхах, народниксен „тактикине, практикăлă сĕнĕвĕсене тата политикăлă пропагандине" критиклет, çак никĕс çинче вара вырăс марксисĕсен задачисен паха программине кăларса тăратаť.

Ленин „Что такое „друзья народа" кĕнекене марксисла партин теорилĕ никĕсĕсене — диалектикăлă тата историлĕ материалисăма хӳтĕленинчен тата вĕсене никĕслесе кăтартнинчен пуçлаť. Вăл çакна калама çук чаплăн кăтартса параť: марксисла теорире шухăшласа кăларни, искусственнă туни—йапаласен чăн-чăн аталанăвне хирĕç пыракани нимĕн те çук. Ленин Марксăн гениле произведенине „Капитала" анализласа, калама çук чаплă страницăсем çыраť. „Капитал" тухнă вăхăтранпа вара историйĕ материалисăмла ăнланасси гипотезă мар ĕнтĕ, вăл наукă тăрăх ĕнентернĕ положени" пулса тăраť, тесе кăтартса параť. (Ленин, т. I, стр. 63).

Историлĕ материалисăм кăна—диалектикăлă материалисăма обшчĕствăлă пурнăçа вĕренес ĕç çине сарса йани пулса тăракан историлĕ материалисăм кăна етемлĕх историне, обшчĕствăлă аталанăва наукăла, пĕртен пĕр тĕрĕс ăнлантарса параť, пĕр обшчĕствăлă формăсенчен тепĕр формăсем çине куçнине ăнлантарса параť, коммунисăм историре пурпĕрех пулмалине ĕнентерсе параť.

Марксисла теорине хӳтĕлесе тата ăна малала аталантарса, Ленин çак теорин аслă вăйне уççăн характеристикă параť: „Илĕртсе тăракан нимĕн çĕнтерейми вăй—çак теори патне пĕтĕм çĕршывсенчи социалиссене туртса тăракан вăй вăл çакăнта тăраť: вăл теори çирĕп те чи çӳлĕ аслăлăхлă пулнине (обшчĕствăлă наукăн чи йулашки сăмахĕ пулса тăрса) революцилĕхпе пĕрлештерсе тăраť, тата вăл вĕсене ăнсăртран пĕрлештермест, вĕсене вăл доктринă никĕсне хывакан ученăйпа революционер пахалăхĕсенче хăйĕнче хăй пĕрлештерсе тăнăран кăна мар пĕрлештерет, вĕсене вăл теорире хăйĕнче шалтан тата уйăралми пĕрлештерсе тăраť" (т. I, стр. 218).

Марксисăма вулъгаризацилене хирĕç, марксисăм теорине хытса ларнă, пĕрре ĕмĕрлĕхех панă хатĕр схемă вырăнне хума хăтланнисене хирĕç Ленин уйрăмăнах вăйлăн протеслет.

Рабочи клас, тесе вĕрентет Ленин, етемлĕх обшчĕствин историнче чи малта пыракан клас пулса тăраť, вăл хăй пурнăçĕн обшчĕствăлă условийĕсене кура, пурпĕрех капиталисăм масарне чавакан ĕ пулса тăмалах. „Çавăнпа ĕнтĕ, социал-демократсем хăйсен пĕтĕм тимлĕхне тата хăйсен пĕтĕм шанчăкне çак клас çине хучĕç, вĕсен хăйсен программине çак класăн класлă ăнланăвне аталантарасси патне илсе пычĕç, хăйсен пĕтĕм ĕçĕсене кучухнехи режима хирĕç тӳрех политикăлă кĕрешĕве çĕкленме вĕсене пулăшас çĕре, вăл кĕрешĕве пĕтĕм вырăс пролетариатне туртса кĕртес çĕре йачĕç". (Ленин, т. I. стр. 103—104).

Народниксем массăсен йухăмне йышăнмасăр тăнă вăхăтра, „ушкăн" çине баринла йĕрĕнсе пăхнă, ăна уйрăм „геройсене" сукăрăн пăхăнса тăракан, пĕр тĕллевлĕ шухăшсăр вăй, тесе шутланă вăхăтра,—В. И. Ленин „Что такое „друзья народа" кĕнекере халăх çинчен, халăх—историне тăвакан чăн-чăн вăй, тесе калаť. Пирĕн аслă тăван çĕршыври ĕçсыннисем кĕввинç çĕмĕрме çеç мар, тата чаплă çĕнĕ пурнăç тума та пултарассине вăл тарăнăн ĕненет. Халăха експлоатацин кирек мĕнле формисенчен те ирĕклетессишĕн вĕçне çитиех ĕçлесси, халăх тăшманĕсем хăйсен предательле ăшчикне кирек мĕнле тумпа витсе пытарсан та вăл тăшмансене вĕçĕ-хĕррисĕр курайманăр тăрасси,—çакăн пек ĕнтĕ Ленинăн вилĕмсĕр кĕнекин тĕп лозунгĕ, йертсе пыракан тĕп идейи.

III.

Ленин народниксен—иртнĕ ĕмĕрĕн 90-мĕш çулĕсенче кулаксен интересĕсене хӳтĕлекенсен намăслă ролĕ патне çити анса ларнă народниксен идеологийĕпе политикин класлă содержанийĕне уççа параť. Народниксен программи йалта, тесе кăтартса параť Ленин, „буржуазийе вăйлатма тата аталантарса йама çеç пултараť" (т. I, стр. 143).

90-мĕш çулсенчи народниксем чăннипе илсен патша самодержавине хирĕç революцилĕ кĕрешессинчен пĕтĕмпех пăрăннă. Вĕсем уççăнах патша правителствипе килĕшме чĕнесси патне çитсе тăнă, вĕсем патша правителстви çине, вăл клас тулашĕнче тăракан вăй тесе, вăл ĕçсыннисен положенине лайăхлатма хапăл тусах килĕшет, тесе пăхнă. „Халăх тусĕсем",—тесе тарăхса çырнă Ленин,—„ĕçсыннисене ирĕке кăларас тĕлĕшпе хăйсен ĕмĕчĕ-шанчăкĕсене „правителствăпа" обшчĕствă çине, урăхла каласан, шăпах ĕнтĕ ĕçсыннисене пур çĕрте те сăнчăрласа лартнă çав буржуазин оргăнĕсем çине хураççĕ.

Çакăн пек йĕпе наймакасем социал-демократсен идеалсăрлăхĕ çинчен пуплешме тармакланаççĕ вĕт-ха!" (т. I, стр. 142).

Народниксем ун чухнехи Росçийăри класлă хирĕçӳлĕхсене, антогонисăмсене пытарма хăтланнине, „халăх тусĕсем" експлоатацилекенсемпе експлоатацилекенсене „килĕштерме" хăтланнисене Ленин пĕр шеллемесĕр тăрă шыв çине кăлараť.

„Халăх тусĕсем",—тесе çырнă Ленин,—çак антогонислăх çинчен мăннă, пирĕн патра та, свйатой Руçра, чăн-чăн буржуасем „демократисăмпа витĕнсе" пытанса тăнине нимĕн туйми пулса çитнĕ; çавăнпа та ĕнтĕ вĕсем реакцилĕ (пролетариат тĕлĕшпе), мĕншĕн тесен вĕсем антогонисăма шăлса йакатса пыраççĕ, вĕсем кĕрешӳ çинчен мар, килĕштерӳлĕ кулътурничĕски ĕç çинчен пуплешеççĕ" (т. I, стр. 181).

Вара Ленин революциччен хи Росçийăри обшчĕствăлă условисене тарăнăн наукăлă анализ туни тăрăх, çакна калама çук пысăк ĕнентерӳлĕ вăйпа кăтартса параť: експлоатацилекенсен експлоататăрсене хирĕçле пĕр шелленсĕр класлă кĕрешĕвĕ кăна, массăсен революцилĕ йухăмĕ кăна халăх курайман патша режимне сирпĕтсе пăрахма пултараť, експлоататăрла классем пуç пулса тăнине пĕтерсе хума пултараť.

„Социал-демократсен политикăлĕ ĕçĕсем,—тесе çырнă Ленин,—çаксем пулаççĕ: Росçийăри рабочисен йухăмне аталанма тата организациленме пулăшасси, вăл йухăма,—халъхи вăхăтра сапаланчăк, йертсе пыракан идейăсăр протест, «бунтсем» тата стачкăсем тума хăтланнисем çинче тăракан йухăма,—çĕнетсе улшăнтарса, пĕтĕм вырăс рабочи класăн организацилĕ кĕрешĕвĕ туса хума—буржуалă режима хирĕç пыракан тата експлоататăрсене експроприацилесси патне пыракан, ĕççыннисене пусмăрлани çинче тытăнса тăракан обшчĕствăлă йĕркесене пĕтересси патнеле пыракан организацилĕ кĕрешӳ туса хурасси. Марксиссем, вырăс рабочийĕ—Росçийăри пĕтĕм ĕçсыннисен тата експлоатацилекенсен пĕртен пĕр тата йестественнăй представителĕ, тесе марксиссем пĕтĕмĕшпе ĕненни çак ĕçсен никĕсĕ пулса тăраť" (т. I, стр. 193).

Народниксем, тесе кăтартса параť Ленин, пĕрре те хăйсем кăтартма хăтланнă пек пулман, вĕсем хресченсене хӳтĕлекенсем пулман. Вĕсем йалти чухăнсен положенийĕ çине, чухăнсене кулаксем експлоатацилени çине куçа хупса пăхнă, чăннипе илсен вĕсем кулаксен интересĕсене палăртса тăраканнисем пулнă. Пролетариат гегемонине хирĕç тухса, вĕсем хресченсене çĕмĕрсе тăкмала туса пынă.

Вĕсем рабочи класа хресченсенчен, хресченсене рабочи класран уйăрса пынă. Ленин çакăнта та народниксене вĕçне çитиех тăрă шыв çине кăларнă. Вăл рабочи класăн революцири ролĕ çинчен тăракан ыйтăва çеç мар, тата хресченсен революцири ролĕ çинчен тăракан ыйтăва та чăн-чăн марксисла татса панă, вăл «патша йĕркине, помешчиксене, буржуйсене сирпĕтсе антармали май пулса тăракан рабочисемпе хресченсен революцилĕ союзĕн идейине чи пирвай кăларса тăратнă» („ПСК(б)П Историйĕ", стр. 21).

Истори çакна кăтартса пачĕ: експлоатацине пĕтерсе лартассине хресченсем пролетариатпа союзлă пулнипе тата вăл йертсе пынипе çеç тума пултарнă тата ăна çавăн пекех турĕ те вăл.

Ленинăн çак кăтартăвĕсем пĕтĕм тĕнчипех калама çук пысăк историлĕ вырăн йышăнса тăнă.

„Паллă,—тесе кăтартса параť Сталин йулташ „Американ рабочисен пĕрремĕш делегацийе калаçнинче",—пролетариат гегемонин идейи Ленинпа унăн партине пула. Росçийăра питех те ăстан пурнăçа кĕрсе пычĕ. Çакăнтан килет те ĕнтĕ, сăмах майĕпе каласан, Росçийăри революци пролетариата влаç патне илсе пынă факт" (Вопросы ленинизма, изд. 10, стр. 171).

„Что такое „друзья народа" кĕнекере Ленин Росçийăра çывхарса килекен çĕнтерӳлĕ коммунисла революцине малтанах гениле курса тăнă.

Ленин малашнехине çапла чаплăн курса тăни тĕрĕс пулнине мухтавлă болъшевикла партин пĕтĕм çулĕ, виçĕ революцин,—1905 çулти буржуалă-демократилĕ революцин, 1917 çулти февралъти буржуалă-демократилĕ революцин тата 1917 çулти çĕнтерӳлĕ социалисăмлă аслă революцин пĕтĕм çулĕ çирĕплетсе пачĕ.

Проф. М. П БАСКИН.

Коммуниссене вĕренме пулăшассине лайăхлатмала

„ПСК(б)П истории Кĕске курсне" кăларнă май парти пропагандине йĕркелесси çинчен" ПСК(б)П Тĕпкомĕ йышăннă постановленине Тăвай районĕнчи коммуниссем пĕтĕм кăмăлтан ырлаççĕ.

Парти Тĕпкомĕн постановленийĕ парти историне вĕренес ĕçре халиччен пулнă çитменлĕхсене тарăнăн уçса палăртаť, малашне парти пропагандине туса пырас ĕçĕн Сталинла программи пулса тăраť.

Иртнĕ вăхăтра парти историне вĕренес ĕçре Тăвай районĕнче те пысăк çитменлĕхсем пулнă. Коммуниссене пурне те кружоксене йавăçтарнипе лăпланса, вĕренӳ пахалăхне айаккине тăратса хăварнă. Чылай коммуниссем парти историне вĕренмели кружок занъатине 10—15 километра, район центрне çӳренĕ. Коммунис-учителсем уйăхра 4—5 кун шкулта вĕрентессине пăрахсах, лав тытса район центрне кружок занъатине кайнă, занъатисем пулманнипе вăхăта ахалех ирттернисем те час-часах пулнă.

Парти историне вĕренекенсене пулăшас ĕç те йулашки кунччченех питĕ йапăх пулса пынă. Парткабинетра виçĕ уйăх хушши ĕçлекен пулман. Парти райкомĕ марксисăм-ленинисăм теорине вĕренес ĕçре коммуниссене пулăшас, теорилĕ ыйтусем тăрăх консулътацисем, лекцисем организацилес тĕлĕшпе план туса хатĕрлемен-ха.

ПСК(б)П Тĕпкомĕ хăйĕн постановленийĕнче марксисăм-ленинисăма вĕренессин тĕп меслечĕ—харпăрхăй тĕллĕн вĕренесси пулса тăраť, тесе палăртаť. Коммуниссем çакна ырлаççĕ. Коммунисемпе комсомолĕцсем тата совет интеллигенцийĕ парти историне харпăрхăй тĕллĕн вĕренме пултараççĕ.

Халъ çак ĕç пуçланнă ĕнтĕ. Чылай коммуниссем парти историне харпăрхăй тĕллĕн вĕренеççĕ. Анчах вĕсене пулăшу кирлĕ.

Парткабинетсен, пысăк квалификацилĕ пропагандиссен вĕсене тăтăшах пулăшса тăмала. Теорилĕ ыйтусем тăрăх консулътацисем кирлĕ. Йалсенче вулав пӳлĕмĕсем тумала, вулав çурчĕсенче пуринче те Маркс, Енгелъс, Ленин, Сталин произведенийĕсем çителĕклĕ пулмала.

М. Разномазăв.

ПСК(б)П Тăвай райкомĕн инструктăрĕ.

ПСК(б)П Йетĕрне райкомĕн пленумĕ

Çак кунсенче ПСК(б)П Йетĕрне райкомĕн пленумĕ пулса иртрĕ. Пленум, халăх тăшманĕсене хирĕç кĕрешменшĕн, Полтĕвăн партийе хирĕçле ĕçĕсемпе килĕшнĕшĕн, хуçалăх ĕçĕсене йертсе пыманшăн ПСК(б)П райкомĕн пĕрремĕш çекретарне Йухтанăв йулташа çекретартан та, райком членĕнчен те кăларчĕ.

Пленум Черногубăв, Сидуганăв, Кожайĕв йулташсене кандидатран райком членне куçарчĕ.

Райкомăн пĕрремĕш çекретарне Албутăв йулташа, иккĕмĕш çекретарне Лепешкин йулташа суйларĕ. ПСК(б)П райком бӳрове Лепешкин, Боровкова, Макарăв йулташсене çĕнĕрен кĕртрĕ. Райхаçат редактăрĕ пулса ĕçлеме Макарăв йулташа çирĕплетрĕ.

Комсомолăн отчотпа суйлав пухăвĕсене парторганизацисен йертсе пымала

Канаш районĕнче 1671 комсомолĕц, вĕсенчен 685-шĕ комсомол ретне çак çул хушшинче кĕнĕ. Çĕнĕрен 14 пуçламĕш организаци тунă. Анчах çĕнĕрен кĕнĕ комсомолĕцсене политикăлă воспитани парасси, вĕсене ĕçе йавăçтарасси çителĕксĕр пулса пыраť-ха.

Халъхи вăхăтра комсомол организацисенче отчотпа суйлав пухăвĕсем пулса иртеççĕ. Анчах парторганизацисем çак ĕçре комсомол организацисене çителĕклĕ пулăшса пымаççĕ. Шаккăлти, Йумансарти, райĕçтăвком тата вăтам шкул çумĕнчи комсомол организацисен отчотпа суйлав пухăвĕсенче пĕр коммунис та пулман.

МТС-ри тата „Авангард" колхозри пуçламĕш комсомол организацисенче отчотпа суйлав пухăвĕсем вăхăтра пулса иртменни те парторганизацисем пулăшманнинчен килнĕ.

Хăшпĕр пуçламĕш организацисенче ПССЛКС Тĕпкомĕ çирĕплетнĕ суйлав инструкцине пăснисем те пулнă. Вăрăмпуçĕнчи пуçламĕш организацинче комсомолăн районри конференцине каймали делегатсене уççăн сасăласа суйланă.

Комсомол организацисенче отчотпа суйлав пухăвĕсене ирттерес ĕçре пулнă йăнăшсемпе çитменлĕхсем çинчен парти райкомĕ малтанах пĕлнĕ пулин те, вăл ыйтăва нойаберĕн 17-мĕшĕнче çеç хăйĕн ларăвĕнче пăхса тухнă.

Комсомол райкомĕ 86 комсомолĕца парти ретне кĕме рекомендаци панă, вĕсенчен халлĕхе 36-шне çеç парти райкомĕ çирĕплетнĕ-ха.

Г. Сахалкин.

Кандидатсем çинчен маннă

Карачурари (Шупашкар районĕ) туллимар вăтам шкул çумĕнчи комсомол организацийĕ питĕ йапăх ĕçлесе пыраť. Çак çул хушшинче пĕр çамрăка та комсомол ретне илмен. Иртнĕ çулах икĕ çынна кандидата илнĕ пулнă, анчах вĕсене комсомол райкомĕнче халъ те çирĕплетмен, пуçламĕш организацинче те вĕсем çинчен мансах кайнă. Комсомолĕцсен пухăвĕсен протоколĕсене лайăх йĕркелесе пымаççĕ.

Карачура колхозĕ çумĕнче пуçламĕш комсомол организаци тăвас тĕлĕшпе шкулти комсомолĕцсем те, комсомолăн Шупашкар райкомĕ те ĕçлемеççĕ.

Пуçламĕш организаци йапăх ĕçленĕ пулин те, отчотпа суйлав пуххинче критикăпа самокритикă пулмарĕ. Комсорг Гаврилăв йулташ отчота çырса хатĕрлемен. Пренире пурĕ те пĕр çын çеç тухса каларĕ.

В. Порфирйĕв.

ӲКЕРЧӖК ҪИНЧЕ (сулахайран сылтӑмала): 1) Кољцовкӑри Сталин йачӗпе тӑракан колхозри 7-мӗш бригадӑн бригадирӗ Николай Ваҫилйевич Оленин й., ПСК(б)П членӗ, унӑн бригади кӑҫал вӑтам шутпа гектартан 16 цент. ыраш туса илнӗ, вӑл хӑй пӗччен 400 ӗҫкунӗ тунӑ; 2) Кољцовкӑ йалӗнчи урамсенчен пӗри; 3) Колхоз правлени председателӗн заместителӗ Йефим Иегорӑвич Сидоркин йулташ.

Г. Костин фото-ӳкерчӗкӗ.

Ҫитес ҫулхи вӑйлӑ тырпулшӑн ӑмӑртӑва тухрӗҫ

Нойаберӗн 25—26-мӗшӗсенче Кољцовкӑри (Вӑрнар р). Сталин йачӗпе тӑракан колхоз пуҫламни вунӑ ҫул тултарнӑ йатпа йубилейне ирттерчӗ. Колхоз уйавне республикӑри 120 колхозран — колхоз председателӗсем, бригадирсем, уйхир тата выљӑх-чӗрлӗх стахановӗҫӗсем 120 ҫын пухӑннӑ.

Колхоз вунӑ ҫул тултарнӑ йубилей колхозниксен чаплӑ праҫникӗ пулса тӑчӗ. Ҫак уйава Кољцовкӑ колхозникӗсем тӗплӗн хатӗрленсе, государствӑ умӗнчи обйазательствӑсене тултарса, ҫитес ҫулхи вӑйлӑ тырпулшӑн кӗрешӗве тивӗҫлипе пуҫарса кӗтсе илчӗҫ.

Нойаберӗн 25-мӗшӗнче Кољцовкӑ колхозне пухӑннӑ хӑнасем иртен пуҫласа каҫченех колхоз хуҫалӑхӗпе тата колхозӑн паха опычӗсемпе паллашрӗҫ. Хӑнасем выљӑх-чӗрлӗх фермисенче, вӑрлӑхсене усракан ампарсемпе складсенче пулчӗҫ. Кољцовкӑ колхозӗн виҫӗ фермӑ: сӗт-ҫу, сысна тата сурӑх фермисем пур. Вӗсенче пурӗ 700 пуҫа йахӑн выљӑх шутланать. Кашни фермӑн хӑйӗн вите. Выљӑхсене зоотехникӑ кӑтартнӑ пек пӑхса усраса тупӑш нумай илеҫҫӗ.

Вӑрлӑхсене усрамалли ампарсемпе складсем хӑнасене килӗшрӗҫ. Вӗсене техникӑна пӑхӑнса тунӑ. Складсенчи тырӑсем уҫӑлса тӑччӑр тесе трубасем тунӑ. Ҫавӑнпа ҫакӑн пек складсенчи тырӑсем хӗрсе пӑсӑлма тата тырӑсене сийенлекен сӑвӑссем (клешчсем) ӗрчеме пултараймаҫҫӗ.

Кољцовкӑ колхозӗ ҫитес ҫулхи ҫуракине хатӗрленме тытӑннӑ. Йалхуҫалӑх машинӗсене йусаса сарайне вырнаҫтарса лартнӑ Вӑрлӑх фончӗсене туса ҫитернӗ. Минераллӑ удобренисене кашни бригадӑ кӳрсе килнӗ.

Нойаберӗн 25-мӗшӗнче каҫхине 5 сехетре колхозӑн йубилейлӑ пухӑвӗ уҫӑлчӗ. Ку пухура партин Чӑваш Обкомӗн ҫекретарӗ Волкӑв, Чӑваш АССР Ҫӗрӗҫ Халӑх Комиссарӗ Коротков, Чӑваш АССР Шалти Ӗҫсен Халӑх Комиссарӗ Каҫакин.партин Чӑваш Обкомӗн йалхуҫалӑх пайӗн пуҫлӑхӗ Серебренникӑв, Чӑваш АССР Верховнӑй Совет Президиумӗн ҫекретарӗ Гуҫӗв йулташсем пулчӗҫ.

Пухура колхоз председателӗ Жарков йулташ Кољцовкӑ колхозӗ вунӑ ҫул хушшинче тунӑ ҫитӗнӳсемпе опытсем ҫинчен доклад туса пачӗ. Вӑл хӑйӗн докладӗнче колхоз вӑйлӑ тырпулшӑн мӗнле кӗрешсе пыни ҫинчен тӗплӗн каласа пачӗ.

Кољцовкӑ колхозӗ ҫӗре минераллӑ удобренисемпе ҫемҫетес тӗлӗшпе ҫине тӑрса ӗҫлет. 1937 ҫулта минераллӑ удобренисем 23 пин тенкӗлӗх, 1938 ҫулта 17 пин тенкӗлӗх илсе, вӗсемпе тӗрӗс уса курнӑ.

Пухура тата партин Чӑваш Обкомӗн ҫекретарӗ Волкӑв йулташ, унтан ЧАССР Ҫӗрӗҫ Халӑх Комиссарӗ Коротков йулташ тухса сӑмах каларӗҫ. Вӗсем йалхуҫалӑхӗ умӗнче тӑракан задачӑсем ҫинчен, государствӑ умӗнчи обйазательствӑсене вӑхӑтра тултарма кирли ҫинчен чарӑнса тӑчӗҫ.

Пуху халӑхсен ҫулпуҫӗ Сталин йулташ патне тата Молотӑв йулташ патне саламлӑ телеграммӑсем йама йышӑнчӗ. Пухура партин Горький Обкомӗпе Облӗҫтӑвкомӗ тата Совет Сойузӗн Геройӗ Пумпур йулташӑн Кољцовкӑ колхозӗ вунӑ ҫул тултарнӑ йатпа йанӑ саламлӑ телеграммӑсене вуласа пачӗҫ.

Ҫакӑнпа йубилейлӑ пуху тепӗр кунччен хупӑнчӗ. Колхозниксемпе хӑнасем „Человек с ружьем" йатлӑ калаҫакан кинокартинӑ курчӗҫ.

Нойаберӗн 26-мӗшӗнче йубилейлӑ пуху малалла ӗҫлерӗ. Пухура партин Чӑваш Обкомӗн йалхуҫалӑх пайӗн пуҫлӑхӗ Серебренникӑв йулташ вӑрлӑх фончӗсем тӑвас, вӑрлӑхсене тасатас, йалхуҫалӑх машинӗсене йусас, минераллӑ удобренисем хатӗрлес ӗҫсем ҫинчен тӗплӗн каласа пачӗ. Кун хыҫҫӑн Кољцовкӑ колхозникӗсем тата республикӑри колхозсенчен пынӑ хӑнасем хӑйсен вӑйлӑ тырпул туса илес, выљӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫсенчи паха опычӗсем ҫинчен каласа пачӗҫ. Вӑрнар районӗнчи „Пӗрлешӳ" колхоз председателӗ Николайӗв йулташ кӑҫал вӑйлӑ тырпулшӑн ҫине тӑрса кӗрешсе, вӑтам шутпа гектартан 16 центнӗр ытларах тӗштырӑ туса илни ҫинчен каласа пачӗ. Ку колхоз кӑҫал кашни ӗҫкунӗ ҫине ултӑ килограм тӗштырӑ, 1 тенкӗ те 15 пус укҫа валеҫсе парать.

Шӑнкӑртам районӗнчи „Хӗрлӗ Октйабӗр" колхозран пынӑ колхозник Булатӑв йулташ кӑҫал вӑтам шутпа кашни гектартан 18,4 центнӗр тӗштырӑ туса илни ҫинчен каларӗ.

Кољцовкӑ колхозӗн председателӗ Жарков йулташ хӑйӗн йулашки сӑмахӗнче Кољцовкӑ колхозне 120 колхозран пухӑннӑ хӑнасене ҫитес ҫулхи вӑйлӑ тырпулшӑн тата йышлӑ выљӑх-чӗрлӗхшӗн кӗрешме социалисӑмлӑ ӑмӑртӑва тухма чӗнчӗ. Ҫак чӗнӗве хӑнасем пысӑк хаваслӑхпа йышӑнчӗҫ. Ҫитес ҫулта вӑтам шутпа кашни гектартан 110 пӑтран кайа мар тӗштырӑ туса илессишӗн, йышлӑ выљӑх-чӗрлӗхшӗн кӗрешме социалисӑмлӑ ӑмӑрту договӑрӗ туса ҫирӗплетрӗҫ. Ҫавӑнпа пӗрлех Кољцовкӑ колхозӗн паха пуҫарӑвне пур колхозсене те сарса, ҫитес ҫулхи вӑйлӑ тырпулшӑн кӗрешӗве хутшӑнма чӗнчӗҫ.

Йубилейлӑ пуху пӗтнӗ хыҫҫӑн Кољцовкӑ колхозникӗсем хӑйсен столовӑйӗнче хӑнасене апатлантарчӗҫ, йулташлӑ вечӗр ирттерчӗҫ тата хӑйсен килӗсене илсе кайса хӑна турӗҫ.

Гр. Калинин.

Кољцовкӑ колхозӗнче курнисем

Вӑрнар районӗнчи Сталин йачӗпе тӑракан колхоз ӗҫӗсем ҫинчен часчасах епӗ хаҫатсем ҫинче вулаттӑм. Ҫавӑнпа епӗ ку колхозӑн ӗҫӗсемпе тӗплӗн паллашасчӗ, тесе ӗмӗтленеттӗм. Кӗтнӗ ӗмӗт ҫитрӗ. Ҫак иртнӗ кунсенче Кољцовкӑри Сталин йачӗпе тӑракан колхозӑн вунӑ ҫулхи йубилейӗнче пултӑм.

Чӑн та, Кољцовкӑ колхозӗ вунӑ ҫул хушшинче пысӑк ҫитӗнӳсем тунӑ. Вӑл ҫитӗнӳсемпе тата унӑн паха опычӗсемпе тӗплӗн паллашрӑмӑр. Уйрӑмах мана Кољцовкӑ колхозӗ выљӑх-чӗрлӗх ӗрчетес тӗлӗшпе аван ӗҫлени савӑнтарать. Фермӑсенче ӗҫлекенсем зоотехникӑ йӗркисене лайӑх пӗлеҫҫӗ. Кунта ӗнесӗр колхозниксем ҫук.

Кољцовкӑ колхозӗ вӑйлӑ тырпул туса илес тӗлӗшпе республикӑра паллӑ колхоз пулса тӑчӗ. Ку колхозра курмалисем, вӗренмелисем питех те нумай. Ҫак колхоз чӑнчӑнах большевикла ӗҫлет, колхозниксем пуйан пурӑнаҫҫӗ.

Епӗр, Кољцовкӑ колхозне пухӑннӑ колхоз председателӗсем, бригадирсем, стахановӗҫсем ҫитес ҫулхи вӑйлӑ тырпулшӑн, йышлӑ выљӑх-чӗрлӗхшӗн кӗрешме социалисӑмлӑ ӑмӑрту договӑрӗ туса ҫирӗплетрӗмӗр. Ҫапла пирӗн колхоз республикӑри 120 колхозпа, вӑл шутрах Кољцовкӑ колхозӗпе ӑмӑртса ӗҫлеме тытӑнчӗ.

Епӗр, республикӑра малта пыракан Кољцовкӑ колхозӗнчен йулмасӑр, ӑмӑртура кисеплӗ вырӑн йышӑнассишӗн ҫине тӑрса ӗҫлӗпӗр.

М. П. Капчикӑв.

Орденоносӗн, Шӑмӑршӑ районӗнчи „Трийер" колхоз председателӗ.

— о —

Епӗр те йулмастпӑр

Епӗ Кољцовкӑри колхоз вунӑ ҫул тултарнӑ йубилейре пултӑм. Виҫӗ кун хушшинче епӗ Кољцовкӑ колхозӗн опычӗсемпе чылайах паллашрӑм.

Кољцовкӑ колхозне кайса курни маншӑн паха шкул пулса тӑчӗ. Ку колхозра ӗҫ дисциплини ҫирӗп. Колхозниксем агротехникӑ ӗҫӗсене тӗрӗс пурнӑҫа кӗртсе пынипе вӑйлӑ тырпул туса илеҫҫӗ. Ҫапла вӗсем уйар ҫанталӑка пӑхӑнми пулма вӗренсе пыраҫҫӗ. Ҫакӑ ӗнтӗ колхозсемшӗн чи хакли пулса тӑрать.

Сталин йачӗпе тӑракан колхоз ҫитес ҫулхи ҫуракине хатӗрленсе ҫитнӗпе пӗрех. Йалхуҫалӑх машинӗсем йусавлӑ. Вӗсене кӳлсе тух та ӗҫлеме тытӑн. Вӑрлӑхсем ҫителӗклӗ, вӗсене тасатса, суртласа хунӑ. Ҫителӗклӗ таран минераллӑ удобренисем кӳрсе килнӗ.

Епӗр хаљ ӗнтӗ Кољцовкӑ колхозӗпе ҫитес ҫулта вӑйлӑ тырпул туса илессишӗн ӑмӑртӑва тухрӑмӑр. Ҫакӑ ӗнтӗ пирӗн колхоз ҫине пысӑк ответлӑх хурать. Епӗр ҫитес ҫулхи вӑйлӑ тырпулшӑн кӗрешме тытӑнманпа пӗрех-ха. Кӑҫал епӗр вӑтам шутпа гектартан 13 центнӗр тӗштырӑ туса илтӗмӗр пулсан, ҫитес ҫулта 110 пӑтран кайа мар туса илмеле. Ҫакӑн пек вӑйлӑ тырпул туса илме пирӗн пур колхозниксен те ҫине тӑрса ӗҫлемелле. Хаљ епӗ йертсе пыракан колхозра вӑрлӑхсене суртласа пӗтермен, йалхуҫалӑх машинӗсене йусаса ҫитермен. Епӗ хамӑр колхоза таврӑнсанах колхозниксене Кољцовкӑ колхозӑн ӗҫӗсем ҫинчен тӗплӗн каласа паратӑп. Ҫитес ҫулхи вӑйлӑ тырпулшӑн кӗрешӗве тивӗҫлипе пуҫарса йаратпӑр. Ӑмӑртура пирӗн колхоз та малти вырӑна тухса, Пӗтӗм Сойузри йалхуҫалӑх выставкинче пулма тивӗҫлӗ пулӗ.

М. Ф. Скворцов.

Ҫӗрпӳ районӗнчи „Ӗмӗт" колхоз председателӗ.

Бригадӑ трактӑрсене йусаса пӗтерне

Ҫӗрпӳри машинӑ-трактӑр станцин Шишкин йулташ йертсе пыракан трактӑр бригади кӑҫал пур ӗҫре те ытти бригадӑсенчен малта пычӗ. Ку бригадӑ районра чи малтан кӗрхи ҫӗртме тумалли плана тултарчӗ.

Кӗрхи ӗҫсем пӗтрӗҫ. Шишкин бригади машинӑ-трактӑр маҫтерскойӗнче хӑйӗн трактӑрӗсене йусама тытӑнчӗ. Хаљ ӗнтӗ бригадӑ трактӑрсене йусаса пӗтерчӗ.

Анчах маҫтерскойри ҫитменлӗхсене палӑртмала. Маҫтерскойра сивӗ, час-часах шыв пулмасть, вентиљаци ҫук. Ҫак ҫитменлӗхсене халех пӗтерес пулать.

Й. П. Павлӑв.

— о —

Иусама та тытӑнман

Чӑваш АССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ трактӑрсене йусасси ҫинчен йышӑннӑ постановленине Сӗнтӗрвӑрри машинӑ-трактӑр станцинче пурнӑҫа кӗртме тытӑнманха. Ку вӑхӑтченех мӗнпурӗ те икӗ ҫейӑлкӑ кӑна йусанӑ.

Чылай трактӑрсем ҫулла ӗҫленӗ вырӑнсенче—колхозсенче лараҫҫӗ. Трактӑрсене йусама график туман.

МТС дирекци ҫаврӑнӑҫусӑр пулнипе пайанки кунччченех трактӑрсен запаслӑ пайӗсене кӳрсе килмен. Маҫтерскойне йусаса ҫитермен.

Н. Кайахӑв.

Ҫӗрулми хатӗрлевӗ

Канаш районӗнче васкани ҫук

Канаш районӗ государствӑна ҫӗрулми тӑратас тӗлӗшпе ҫаплах йулса пырать-ха. Районри уйрӑм колхозсем государствӑна ҫӗрулми памалли обйазательствӑна вӑхӑтра тултарчӗҫ. Анчах ҫавнашкал колхозсем районӗпе те 16 ҫеҫ. Ыттисем вара ҫӗрулми парас йенӗпе начар ӗҫлеҫҫӗ. Калинин йачӗпе тӑракан колхоз 168 центнӗр ҫӗрулми парас вырӑнне, 54 центнӗр ытларах, Молотӑв йачӗпе тӑракан колхоз 46 центнӗр, „Париж Коммунӗ" колхоз 10 центнӗр ҫеҫ панӑ.

Йаманкасси, Аччакасси йалсовечӗсем государствӑна ҫӗрулми тӑратас йенӗпе тӑрӑшса ӗҫленине палӑртса хӑвармала. Аччакасси йалсоветӗнчи коммунистсем Петров, Медведӗв тата Данилӑв йулташсем аван ӗҫлеҫҫӗ. Вӗсем колхозниксемпе йединоличниксем хушшинче политикла-ӑнлантарулӑ ӗҫе лайӑх туса пыраҫҫӗ.

Уйрӑм йалсенчи хӑшпӗр активиссемех государствӑна ҫӗрулми тӑратассинчен хӑтӑлса йулма тӑрӑшаҫҫӗ. Вӑрӑмпуҫри „Коминтерн" колхозри Г. Макҫимӑв активис иртнӗ ҫулшӑн государствӑна ӑшкакай парса татман, кӑҫал та ҫӗрулми пӗр килограм та паман.

Районра йединоличниксем ҫӗрулми парассипе ытла та кайа йулса пыраҫҫӗ.

Канаш районӗнче государствӑна ҫӗрулми памалли обйазательствӑна тултарассишӗн пӗтӗм массӑна мобилизацилемеле, кӗске срукрах ҫӗрулми хатӗрлев планне тултармала.

Г. Сахалкин.

— о —

1938 ҫулшӑн государствӑна ҫӗрулми тӑратмалли плана мӗнле тултарса пынине кӑтартакан СВОДКӐ.

(Декабӗрӗн 1-мӗшне, процентпа).

Улатӑр	84,4
Елӗк	91,5
Патӑрйел	52,6
Вӑрнар	81,9
Йӗпреҫ	66,0
Ишлей	61,5
Канаш	54,4
Куславкка	52,1
Хӗрлӗ Чутай	47,7
Кувакинӑ	45,9
Сӗнтӗрвӑрри	65,9
Пӑрачкав	60,3
Турхан	60,5
Тутаркас	90,7
Трак	66,2
Вӑрмар	40,0
Ҫӗрпӳ	52,5
Шупашкар	77,7
Шӑмӑршӑ	59,1
Шӑхасан	77,5
Шӑнкӑртам	80,0
Ҫӗмӗрле	67,8
Йетӗрне	65,2
Йелчӗк	75,4
Тӑвай	80,2

Республикӗпе 64,5.

Шофӗр ӗҫне вӗренеҫҫӗ

Ҫӗрпӳре фельдшӗрсен шкулӗ ҫумӗнчи Осоавиахим организацийӗ шофӗр ӗҫне вӗренмелли кружок организациленӗ. Кружока авто ӗҫне лайӑх пӗлекен И. Хмелев йулташ йертсе пырать.

Вӗренекенсем кружок заҥатийӗсене пӗр сиктермесӗр ҫӳреҫҫӗ, пысӑк интереспа вӗренеҫҫӗ.

В. Абликӑв.

Сталинла Конституци кунӗ умӗн

Ӑмӑрту сарӑлсах пырать

Шупашкар хулинчи хапрӑксемпе савӑтсенче Сталинла Конституцийе ҫирӗплетни икӗ ҫул тултарнӑ куна кӗтсе илме пысӑк хаваслӑхпа хатӗрленеҫҫӗ. Рабочисемпе работницӑсем Октйабӗр уйавӗ умӗнхи ӑмӑртура тунӑ ҫитӗнӳсене ҫирӗплетсе, тата та лайӑхрах тӗслӗхсем кӑтартассишӗн кӗрешеҫҫӗ.

Водопйанӑв йачӗпе тӑракан тирсӑран савӑтӗнчи стахановӗҫсем хӑйсен ӗҫ нормисене ытлашшипех тултарса пыраҫҫӗ. Ленин йачӗпе тӑракан бригадӑри стахановӗҫ Василий Уракӑв йулташ йаланах нормӑна 200 процент ытла тултарать. Вӑл нойаберӗн 27—28-мӗшӗсенче виҫшер нормӑ тултарнӑ. Анатолий Харитонӑв тата Матвей Шатлайӗв йулташсем те ӗҫре паха тӗслӗхсем кӑтартаҫҫӗ. Иртнӗ уйӑхсенче нормӑна тултарса ҫеҫ пынӑ Иљдейкинӑпа Зверӗвӑ йулташсем халӗ 240—460 процент таран тултараҫҫӗ.

— Плана татах та ытларах тултарма пулать. Анчах материал ҫителӗклӗ мар, тет Зверӗвӑ йулташ.— Сталинла Конституци кунне епӗ ӗҫре татах та пысӑкрах ӳсӗмсем тунипе кӗтсе илетӗп.

Спирт савӑтӗнче те, промысла ертелӗсенче те ӑмӑрту сарӑлса пырать. Анчах ҫакна каламала: профсойуз организацисем ҫак ӑмӑртӑва татах та вӑйлатса пырас тӗлӗшпе начар ӗҫлеҫҫӗ-ха. Вӗсен стахановӗҫсен ырӑ опычӗсене сармала, массӑлла ӗҫе лайӑхрах йӗркелесе йамала.

Хар. Лисин.
И. Федӑрӑв.

Хӑйӗн сӑмахне пурнӑҫа кӗртнӗ

Вӑтам Бакашри промысла ертелӗнчи стахановӗҫ Михаил Коротков кӑҫалхи ҫул 4000 штук чӑпта ҫапса кӑларма обйазательствӑ илсе, республикри чӑптаҫсене ӑмӑртӑва чӗннӗччӗ.

Коротков йулташ илнӗ обйазательствӑна ытлашшипех пурнӑҫа кӗртрӗ. Нойаберӗн 3-мӗшне 4.100 штук чӑпта ҫапса кӑларнӑ, пурте пӗрремӗш суртла. Ҫулталӑк пӗтиччен тата 500 штук ҫапма пулчӗ.

Ӑмӑртӑва хутшӑннӑ ытти ертелсенчи чӑптаҫсем те панӑ сӑмаха ӑнӑҫлӑн тултарса пыраҫҫӗ. Акӑ Чирпуҫӗнчи промертел членӗ Н. Артемйӗв йулташ 10 уйӑх хушшинче 3.554 штук, Г. Алмазӑв (Чурачӑк ертелӗ) — 3.350 штук, А. Кољцов (Ишек ертелӗ)—3.200 штук чӑпта ҫапса хатӗрленӗ.

Халӗ пурте вӗсем Сталинла Конституци ҫирӗплетни икӗ ҫул тултаракан куна хӑйсем ҫине илнӗ обйазательствӑна ытлашшипех пурнӑҫланипе кӗтсе илессишӗн кӗрешеҫҫӗ.

Н. Йашков.

Плана тултарма пур майсем те пур

Канашри вакунсем йусакан савӑт ҫак ҫулсенче ӳссе ҫитӗннӗ пысӑк предпрйатисенчен пӗри пулса тӑрать.

Халӑх тӑшманӗсем—троцкисла-бухаринла шпионсем, буржуаллӑ националистсем ку савӑта тунӑ чухне те, ӗҫе йарсан та хӑйсен сӑтӑрла ӗҫӗсене туса пынӑ. Вӗсем йӑвӑҫ каскалакан комбинатӑн типӗтекен цехне, пурӑнмалли ҫуртйӗрсене т. ыт. те йӗркесӗр тунӑ. Савӑт ӗҫӗнче пысӑк вырӑн йышӑнакан участкӑна — теплоелектроцентрале туса пӗтерессине йурийех кайа хӑварнӑ. Транспарт ӗҫӗнче те чылай сийен кӳнӗ.

Савӑт коллективӗ пулӑшнипе парти, комсомол тата профсойуз организацийӗсем тӑшмансен йӑвисене ҫӗмӗрсе тӑкрӗҫ. Халӗ савӑтра стахановла йухӑм кунсерен ӳссе пырать. Ӑна ҫак тӗслӗхсенчен те аванах курма пулать: 1937 ҫулта стахановӗҫсем 164 ҫын тата ударниксем 86 ҫын пулнӑ пулсан, пайанхи куна 458 стахановӗҫ, 242 ударник шутланать. Ҫавӑнпа пӗрлех ӗҫукҫи те ӳссех пырать. 1937 ҫулта пӗр рабочи вӑтамран уйӑхне 226 тенкӗ ӗҫлесе илнӗ пулсан, халӗ 323 тенкӗ илет.

Кадрсем йенӗпе те пысӑк ӳсӗмсем пур. 1936 ҫулта йалан ӗҫлекен рабочисем 200 ҫын пулнӑ, халӗ 1720 ҫын. Вӑл шутран 64,5 процент чӑвашсем, 35 процент хӗрарӑмсем шутланаҫҫӗ.

Ӗҫре ӳснӗ рабочисемпе стахановӗҫсене 200 ҫынна йахӑн кӑҫал йертсе пыракан вырӑнсене куҫарнӑ. Ҫакӑ вӑл производствӑ планне вӑхӑтра тултарма май парать. Иртнӗ ҫулта савӑт 2735 пин тенкӗлӗх продукци кӑларнӑ, кӑҫал нойабӗр уйӑхӗ тӗлне 4876 пин тенкӗлӗх туса кӑларнӑ.

Савӑт коллективӗ ӗҫпе чапа тухнӑ хӑйӗн ҫыннисемпе мухтанать. Хӗрлӗ йалавлӑ тимӗрҫ цехӗн начаљникӗ пулнӑ К. Т. Назарӑв йулташ Чӑваш АССР Верховнӑй Совечӗн депутачӗ. Халӗ вӑл Чӑваш АССР Вырӑнти промышлӗнӑҫ Халӑх Комиссарӗ пулса ӗҫлет. Вӑл йертсе пыракан цех йаланах малта пынӑ. Ҫавӑн пекех ӗҫре хӑйӗн пултарулӑхне кӑтартнӑ Е. А. Антонӑвӑ йулташ РСФСР Верховнӑй Совечӗн депутачӗ, савӑтра маҫтӑрта ӗҫлет. Кукљайӗв, Ҫеменӑв, Варварин, Царев, Петров, Самарин, Голубӗв, Грачов, Марунов, Сычӗв т. ыт. йулташсен йачӗсене пӗтӗм савӑт пӗлсе тӑрать. Вӗсем хӑйсен нормисене йаланах 150—400 процент таран тултарса пыраҫҫӗ.

Хуҫалӑх тата техникӑ ӗҫӗнчи ответлӑ вырӑнсене куҫарнӑ ҫынсем хӑйсен ӗҫӗсене тӗплӗн тата вӑхӑтра туса пыраҫҫӗ. Настасин инженер Хӗрлӗ йалавлӑ тимӗрҫ цехӗн начаљникӗнче ӗҫлеме тытӑннӑранпа нумай вӑхӑт иртмерӗ пулсан та, вӑл ӗҫ техникине лайӑх хӑнӑхса ҫитме ӗлкӗрчӗ. Цех 10 уйӑх планне 100 процент тултарчӗ. Ҫак цехри Кукљайӗв йулташ йертсе пыракан бригадӑ нормӑна йаланах 245 процент таран тултарать. Рабочи пулса ӗҫленӗ стахановӗҫ Прохӑрӑв йулташ халӗ инструменталљнӑй цех начаљникӗ.

Йулашки вӑхӑтра механически цех начаљникӗ Туљчин йулташ ӗҫе чылайах лайӑхлатрӗ, браксен шутне 0,4 процента йуличчен чакарчӗ. Ку цехри Илйин маҫтӑр ҫмени (унччен рабочи пулса ӗҫлевӗҫкер) пӗр брак тумасӑр ӗҫлет. Таварлӑ комбинат начаљникӗ Соколовский йулташ та кайра пынӑ цеха ура ҫине тӑратрӗ, цех продукци туса кӑларассине 42,37 процент ӳстерчӗ.

Кун пек тӗслӗхсене вуншарӑн кӑтартма пулать. Акӑ инженерсем Шчеглов, Вишњаков йулташсем теплоелектроцентрале вӑхӑтра ӗҫе йарассишӗн тӑрӑшса ӗҫлерӗҫ. Вӗсем тӑшмансен сӑтӑрла ӗҫӗсене тупса палӑртнӑ, тӑрӑ шыв ҫине кӑларнӑ.

Халӗ рабочисемпе инженерла-техникла работниксем хушшинче Сталинла Конституцине ҫирӗплетни икӗ ҫул тултарнӑ тӗле ҫӗнӗ ҫитӗнӳсем тӑвассишӗн кашни куллен ӑмӑрту сарӑлса пырать. Голубӗв, Марунов, Сычӗв, Кукљайӗв т. ыт. стахановӗҫсем ӑмӑртура уйрӑмӑнах паха тӗслӗхсем кӑтартаҫҫӗ.

Анчах парти, профсойуз, савӑт руководителӗсем йенчен ку ӑмӑртӑва тивӗҫлӗн йертсе пыни курӑнмасть-ха.

Савӑтӑн 1938 ҫулхи производствӑ планне ӑнӑҫлӑн тултарма пур майсем те пур, рабочисен коллективӗ ҫирӗп. Руководителсен ӗҫе лайӑх йертсе пыни ҫеҫ кирлӗ.

Ст. Филиппӑв.

Резинӑран йапаласем тӑвакан Шупашкарти савӑт строительствинчи хӗрарӑмсен бригади (сулахайран сылтӑмала): А. Иершовӑ, Е. Михайлавӑ тата А. Д. Андрейӗвӑ йулташсем.

Г. Костин фото-ӳкерчӗкӗ.

Государствӑна тырӑ сутаҫҫӗ

** ТРАК. Районри колхозсем хӑйсенчен ытлашши тырӑна государствӑна сутма тытӑнчӗҫ. Ҫак кунсенче „Вазанар" колхоз членӗсем 35 центнӗр, „Хӗрлӗ Сормӑвӑ" колхоз членӗсем 40 центнӗр сутрӗҫ. „Вазанар" колхоз государствӑна тырӑ сутнӑшӑн автомашинӑ тата жнейкӑ илме зайавкӑ пачӗ.

А. Иванов.

** ЕЛӖК. Пур колхозсенче те государствӑна тырӑ сутас ӗҫ вӑйланса пырать. Районри колхозсем пӗр-пӗрипе социалисӑмла ӑмӑртса государствӑна тырӑ сутаҫҫӗ. Халӗ „Рой" колхоз членӗсем 100 центнӗр, „Испукан" колхоз членӗсем 150 центнӗр тырӑ сутрӗҫ.

В. Степанӑв.

** ИШЛЕИ. „Олгаш" колхоз государствӑна 30 центнӗр тырӑ сутрӗ. Тырӑ сутнӑ укҫапа колхоз трийер илме йалпона зайавкӑ пачӗ.

С. Мамайӗв.

Кинобазӑ тунӑ

Тракра халиччен кинобазӑ пулман. Ҫавна пула район центрӗнче ҫулталӑкӗпе те виҫ-тӑват кинокартинӑ ҫеҫ курма пулаччӗ. Халӗ Трак районӗнче кинобазӑ тунӑ. Ӗҫҫыннисем хаљ кашни каҫах район центрӗнче саслӑ кинофиљмсем кураҫҫӗ.

Ив. Хатаевский.

Инспектӑрсен курсӗ

Районсенчи ҫутӗҫ пайӗсенче ӗҫлекен инспектӑрсен квалификацине хӑпартма, Чӑваш АССР Ҫутӗҫ Халӑх Комиссариачӗ пӗр уйӑхлӑх курс туса ирттерчӗ. Курсран 14 ҫын вӗренсе тухрӗҫ. Халӗ вӗсем пурте районсене ӗҫлеме кайнӑ.

В. Порфирйӗв.

Германири мобилизаци

ЛОНДАН, нойабĕрĕн 29-мĕш. „Ньюс кроника" хаçат, шанчăклă çĕртен илнĕ хыпарсем çине кăтартса, çапла çырать: Германире виçĕ çар корпусне: саккăрмĕш корпуса (штабĕ Бреславльре), вунçичĕмĕш корпуса (штабĕ Венăра) тата вунтăваттăмĕш корпуса мобилизациленĕ. Ултă дивизине пĕтĕмĕшпех мобилизацилене те ĕнтĕ. Тата виçĕ дивизине çак ерне вĕçĕнче мобилизацилесе çитересçĕ кĕтесçĕ. Çак корпуссен офицерĕсене пурне те отпускран чĕнсе илнĕ. Мобилизацине питĕ те васкаласа тăваççĕ. Чукунçулсем çине ытлашши нумай çç тиенипе Берлинпа Вена хушшинчи, Прага урла каçса каякан чукунçул çинче организацийĕ йĕрке пăлтах пăсăлнă. Çапăçăва хатĕрлесе тăратнă çарсенче 110 пин çын шутланать.

Германи çакăн пек мобилизаци туни вăл—Польшă Польшăпа Венгри хушшинче йунашар чиккĕсем тума çине тăрсах тăрашнине хирĕç ответлени пулать, тесе шухăшлаççĕ, тесе çырать хаçат. Германи пĕрлех тата ĕçе лайăх пĕлекен çынсем хушшинче: Германи Чехословакин хĕвелтухăçĕнчи чиккинчи мĕнле те пулин инцидентпа усă курасшăн, çапла майпа вара Чехири, Словакири тата Закарпат Украинкинчи Германи майлă тăракан элементсемшĕн Германирен „пулăшу ыйтма" сăлтав тупса хурасшăн тăрашать, тесе шухăшлаççĕ. Çакă вара Германишĕн пĕтĕм çĕршыва тата Прагăна кĕрсе йышăнма „сăлтав" туса хунă пулĕччĕ, çавăн çинчен вăл Мюнхенри килĕшĕве тупăрапа ĕмĕтленет.

— о —

Рено савăчĕсенчи рабочисене ĕçрен массăлăн кăлараççĕ

ПАРИЖ, нойабĕрĕн 29-мĕш. Парижра Рено савăчĕсен администрацийĕ Рено савăчĕсенче ĕçлекен 32 пин рабочирен 28 пин рабочине ĕçрен кăларса йанă, ку ĕнтĕ нумайăх пулмасть пулса иртнĕ забастовкăна хутшăннăшăн айăпласа тунă ĕç пулать. Ĕçрен кăларнă рабочисене хăйсем çинчен анкетăсем çырса пама хушнă, çав анкетăсене рабочисене ĕçе çĕнĕрен илес умĕн пăхса тухаççĕ.

— о —

„Тимĕр гварди" пуçлăхĕсене вĕлернĕ

Англи хаçачĕсем пĕлтернĕ тăрăх, нойабĕрĕн 30-мĕшĕнче Румынири „Тимĕр гварди" текен фашисла организацин пуçлăхне Кодреануна тата унăн майлисене вунвиçĕ çынна вĕлернĕ.

Вĕлерессе çапла пулнă: фашиссем Кодреануна урăх тĕрмене куçарасси çинчен пĕлсен, конвой пыракан çул çинче засада тунă, конвой пынине курсанах пăшалсемпе персе пуçланă. Конвойпа фашиссем хушшинче пулнă çапăçу вăхăтĕнче Кодреануна унăн майлисене персе пăрахнă.

(ТАСС).

ССР Союзĕ çинчен сарнă суйă хыпара тăрă шыв çине кăларни

ЛОНДАН, нойабĕрĕн 29-мĕш. „Ньюс стейтсмен" журнал статйа пичетлесе кăларнă, вăл статйара çапла калать:

„ССР Союзĕ Чехословакине пулăшма хатĕр пулман тата пулăшасшăн та пулман пек кăтартса парас шутпа суйă пропагандă сарнине хирĕç ССРС руководителĕсем тĕрĕссипех протест турĕç. Чехословакири кризис вăхăтĕнчи событисен йухăмне епĕр мĕн чул тăрăнрах санаса вĕренетпĕр, çакă та çав тарăн уççăнрах курăнса пырать: Англипе Франци дипломатийĕ Гитлĕр кăмăлне йурасшăн йăпăлтатнă, вĕсем, Гитлер хăйĕн кун хыççăнхи утăмне хĕвеланăç йĕнеле мар, Украина йеннеле тăвĕ, тесе шанса тăнă. ССРС Чехословакине пулăшма хатĕр тăни çинчен калас пулсан, кунта вара Совет Союзĕ генеральнăй штабĕсем хушшинче калаçусем пуçлама сĕнӳ пани çине кăтартса пани те çителĕклĕ. Анчах, пурте пĕлеççĕ, Англипе Франци вăл сĕнӳне килĕшмерĕç.

Кунсăр пуçне тата çакăн çинче те кăтартса парас пулать: Чехословакири кризисăн пулăшки самантĕнче патне çитиччен Англи правительстви, Германи Чехословакине хирĕçле агрессине хирĕç тăмала пулсан, ку йĕре ССРС союзник пулма пултарать, тесе шутласа тăнă. Чанах та, хăйĕн çарĕсене Чехословакине пулăшмашкăн тăрукăх илсе пыма Совет Союзĕшĕн йăвăр пулнă пулĕччĕ, мĕншĕн тесен ку ĕç Румынипе тата Польшăпа çыхăнса тăнă пулĕччĕ. Анчах çакăн пирки нимĕн иккĕленмели те çук: Чехословакире вăрçă пуçлансан совет авиацийĕ унта йанă пулĕччĕ, вăл чи витĕмлĕ пулăшу панă пулĕччĕ.

Линдберг совет авиацийĕ çинчен элеклĕ сăмахсем калани усă курма хăтлани ирсĕр пропагандă пулса тăрать. Линдберг ССР Союзĕне пурĕ те пилĕк кун хушши çеç пулнă, паллах, вăл çак кĕске срукра совет авиацийĕ чăннипе мĕнле пулни çинчен нимĕн те пĕлме пултараймăн. Линдберг Германи авиацин хăватне упрамăнах паллă тăвать, çакăншăн ăна Германи орденĕпе награтланине пурте пĕлеççĕ".

Шел, Чехословакири кризис вăхăтĕнче пуçланă пропагандăна хальте чарса лартман-ха, тесе çырать журнал йулашкинчен.

(ТАСС).

— о —

Румыни королĕ Рима кайать

ПАРИЖ, нойабĕрĕн 29-мĕш. „Пари миди" хаçатăн Бухарестри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Румыни королĕ Берхтесгаденра „Германипе Румыни хушшинчи тусăх çинчен пакт" туса хума пуçнă. Çавăн пекех тата декабĕрĕн 20-мĕшĕнче корол Рима тухса кайать, тесе çыраççĕ.

(ТАСС).

Вăрман хатĕрлевĕ

Канашлу иртернипех лăпланнă

Енешпуçĕнчи вăрман участкин хăйĕн планне кварталтан кварталла тултармасăр пынă. Çавăн пекех 4-мĕш квартал планне тултарасси те йапăх пырать. Плана хатĕрлесси тăрăх 32,5 процент, турттарасси тăрăх 11 процент кăна тултарнă.

Мĕншĕн ĕç начар пырать? Вăрманта ĕçлекенсем сахал. Хальхи вăхăтра касна çĕрте 59 çын, турттарнă çĕрте 26 çын çеç ĕçлеççĕ.

Районра икĕ колхоз: „Çĕнĕ пурнăç", „Хĕрлĕ Кĕтне" колхозсем çеç вăрман хатĕрлев ĕçне тивĕçлипе хутшăннă. Вĕсем 165 кубла метр йуман пĕренесем турттарнă. Ытти колхозсем ĕçлеме тухмаççĕха. Сарунĕнчи „Труд" колхоз председателĕ пулнă Афанасйев „вăрман ĕçлеме каймастпăр, унта догăвăра тултараймасан судна аилапаççĕ" тесе колхозниксене ĕçрен сӳрет. Шахаçри „Социализм" колхоз председателĕ Пуклаков йултăш догăвăр тума пырсан, йурийех пăрăнса сӳрет.

Вăрман хатĕрлев планне вăхăтра тултарма ĕç вăйĕ мобилизацилес ыйтупа нойабĕрĕн 21-мĕшĕнче йалсовет председателĕсемпе колхоз председателĕсен районри канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлу 4-мĕш квартал планне декабĕрĕн 20-мĕшĕ тĕлне тултарма пулса Тăвай районне социализмлă ăмăртăва чĕнчĕ. 4-мĕш квартал планне пысăк мар. Кашни кун 96 çуран çын, 150 çын лашапа ĕçлесен плана çăмăллăнах тултарма май пур. Анчах районри организацисем те, колхоз тата йалсовет председателĕсем те канашлу иртернипех лăпланса тăраççĕ, ĕç вăйĕ мобилизацилес тĕлĕшпе таткăлăн ĕçлеме тытăнман.

Вăрмар. Алендеев, Молостовкин.

Колхоз бригади вăрман хатĕрлевĕнче

ПАТĂРЙЕЛ. Хирти Сĕнтĕр йалсоветне кĕрекен „Трактăр" колхоз членĕсем вăрман хатĕрлевĕнче ĕçлеме йатарласа бригада организациленĕ. Бригада нойабĕрĕн 20-мĕшĕнче вăрманта ĕçлеме тытăнчĕ.

Хăлĕ бригадăри колхозниксем пурте пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ. Комсомолец Творогов йултăш çĕнĕ сулăмпа 220 кубла метр йывăç хатĕрлеме пулчĕ.

Вăрманта ĕçлекенсем валли столовăй организациленĕ.

В. Петров.

Ăмăртăва чĕнетпĕр

Вăрманпромхоз пана план тăрăх пирĕн Услапа колхозĕн вăрман хатĕрлевĕ 1938—1939 çулти сезонĕнче 4 пин кубла метр йывăç турттарса кăлармалла. Епĕр çак плана тукчен, декабĕрĕн 20-мĕшĕ тĕлне тултаратпăр. Унсăр пуçне тата хамăр çине 1939 çулти 1-мĕш кварталта март ăн 20-мĕшĕччен 4 пин кубла метр йывăç турттарма пулатпăр.

Пирĕн пек ĕçлеме Хăмашри, Кăмпатти, Пысăк Карачурари колхозсене социализмлă ăмăртăва чĕнетпĕр.

Смирнов.
Вăрнар районĕнчи Услапа колхоз председателĕ.

Колхозсемпе совхозсем валли çĕнĕ журнал

ССР Союзĕн Ленин йачĕллĕ ял хуçалăх наукисен академийĕн „За устойчивый урожай на юго-востоке" йатлă журналăн пĕрремĕш номерĕ пичетленсе тухнă.

Пĕрремĕш номерĕнче пичетленнĕ: В. И. Ленин 1911 çулти тинĕ çанталăк çинчен каланисем, И. В. Сталин тата В. М. Молотов тинĕ çанталăка хирĕç кĕрешесси çинчен каланисем, К. А. Тимирязевăн „Усен-тăранпа тинĕ çанталăка хирĕç кĕрешни" йатлă статйи, Р. В. Вильямс академикăн „Çĕре кĕрхи çĕртме тăвасси çинчен" йатлă статйи, наукă работникĕсен чылай статйисем, каçалкн тинĕ çанталăка пăхмасăрах пысăк тухăç тырпул туса илнĕ колхозсен председателĕсен заметкисем, Библиографи пайĕнче В. С. Назаров стахановецăн кĕнеки çинчен рецензи пичетленĕ. Назаров гектартан 25 центнер вир туса илнĕ. Çав пайрах тата йалхуçалăх ĕçĕ çинчен вулама сĕнĕ кĕнекесен спискине пичетлесе кăларнă.

Журналăн кашни номерĕ 50 пин экземпляр тухать. ССРС Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ журналăн пĕрремĕш номерне кăнтăр-хĕвелтухăçри пур колхозсене совхозсене те уйăрса парать.

(ТАСС).

Джамбул Мускаврa

Нойабĕрĕн 30-мĕшĕнче Мускава Казахстанăн халăх йурăçи орденоносец Джамбул Джабайев пырса çитнĕ. Мухтавлă халăх йурăçне вокзалра Казах ССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕ Ундасынов йултăш, писательсем, поэтсем, литература институчĕн казах-студенчĕсем кĕтсе илнĕ.

Джамбул столицăна хăйĕн йулашки вăхăтра тунă ĕçĕсенчен пĕрне—казах халăхĕн батсемпе хансене хирĕç кĕрешнĕ геройĕ çинчен каласа паракан „Суранши Батыр" йатлă пысăк поемине илсе пынă. Йулашки вăхăтра Джамбул тата „Хасан кӳлли геройĕсем çинчен хунă йурă", „Сталинла Конституци çинчен хунă йурă" т. ыт. те çырнă.

Джамбул Мускаврa темиçе кун хушши пулать.

(ТАСС).

ТӲРЛЕТНИ

„Чăваш Коммунĕ" хаçатăн октабĕрĕн 17-мĕшĕнче тухнă номерĕнче, 3-мĕш страницăн 1-мĕш колонкинче, 3-мĕш абзацăн вĕçĕнче йанăш кайнă. Вăл абзацăн йулашки пуплевне çапла тӳрлетсе вуламалла:

„Российăра пуçланнă çак революцин татăклă çĕнтерĕвĕ çĕкленĕ гаран пĕтĕм тĕнчери пролетариатăн революцийĕ вăйне нимĕн те çĕклеймест, пролетариат пĕтĕмпех çĕнтересси патне пысăк утăм тăвать. Ку патшалăхăн революци ĕçне пĕтерменни çинчен тата пролетариатăн пуçне çĕклени çинчен кăтартать, çав революцин çулне нимĕн те кăсăклантараймест".

Çав страницăн 4-мĕш колонкинчи 3-мĕш абзац пуçламăшне çапла вуламалла:

„Хĕвеланăç Йĕвропăри социал-демократсем çапла шутланă: социализмлă революцийе пролетариат пĕтĕм буржуазие хирĕç, союзниксем çук, пĕтĕм пролетарилĕ мар классене хирĕç пĕр пĕччен пулать, тенĕ".

„Чăваш Коммунĕн" октабĕрĕн 20-мĕшĕнче тухнă „ПСК(б)П Историйĕн" „Кĕске вывăчĕсенче" 4-мĕш абзац йанăш çапăннă. Вăл абзаца çапла вуламалла:

„Революци—либералăнăй буржуази халăхпа мар, патшапа союз шырание, вăл контрреволюцилĕ вăй пулса тăнине, унпа килĕшни халăха сутнипе пĕрех пулнине кăтартса пачĕ".

Октабĕрĕн 26-мĕшĕнче тухнă номерĕн 2-мĕш страницинчи 1-мĕш колонкăн 3-мĕш абзацăн 3-мĕш пуплев вĕçне çапла вуламалла:

„...сахалтарахăшĕ вунайтарахăшне пăхăнтарса тăрас тата ăна чура туса хурас май пуçланса кайна".

— ◆ —

Аластăлăх ертелĕсем валли кадрсем

Кăсăл Чăвашдревпромсоюз аппăн системинчи ертелсене ĕçлеме республикăри курсем урлă бухгалтĕрсем 18 çын, культработниксем 27 çын вĕрентсе кăларнă.

Ертел председателĕсен заместителĕсен пĕлӳне хăпартас тĕлĕшпе йатарласа организациленĕ курс урлă 20 çын вĕренсе тухрĕç.

Кусемсĕр пуçне вырăнта ертелсем хăйсем тата 39 çын вĕрентсе хатĕрленĕ.

Н. Йашков.

Аван ĕçлекен драмкружок

Йĕтĕрне районĕнчи Мичурин йачĕпе тăракан колхоз çумĕнчи драмкружока 1926 çулта организациленĕ. Унтанпа драмкружок пахăа постановкăсем чылай парса малти вырăна тухрĕ. Кружок членĕсем хăйсен пĕлĕвне ӳстерсе пычĕç. Малтанхи çулсенче кружокра утă-çич çын çеç пулнă пулсан, халĕ кружокра 47 çын. Ку шутра 40—45 çулхи колхозниксем те пур.

1938 çулта драмкружок хăйсен колхозĕнче лартнисĕр пуçне, сывăхри колхозсенче 21 постановка панă.

Драмкружок Октабĕр уйавĕнче те колхозниксене спектакль лартса пачĕ. Халĕ драмкружок Конституци кунĕнче лартма „Тăван çĕршывшăн" пĕсăна хатĕрлет.

Н. Амурцĕв.

Ответлă редактăр Н. М. ÇЕМЕНЙВ

Чăваш АССР Апат-çимĕç промышленнăçĕн Халăх Комиссариачĕн ПУЛĂ ХУÇАЛĂХНЕ

аслă бухгалтĕр заместителĕ, секретар-машинисткă

КИРЛĔ.

Аслă бухгалтĕртан Соловйоврăн çак адреспе ыйтса пĕлмелле: г. Чебоксары, ул. Ленинградская, 16, 2—1

Шупашкар'и Çаслă кинотеатр

дирекцийĕ Шупашкарти пур граждансене те кăçалхи декабĕрĕн 1-мĕшĕнче

ÇАСЛĂ КИНОТЕАТРА йусама хупни çинчен

ПĔЛТЕРЕТ.

Дирекци.

ШУПАШКАРТИ КООПЕРАТИВ ТЕХНИКУМНЕ

нимĕç чĕлхипе вĕрентекен

ПРЕПОДАВАТЕЛ ВАСКАВЛĂ КИРЛĔ.

Ĕçунçи—килешӳ тăрăх. Районри килекенсене КЗОТ 82-мĕш статйи тăрăх çул укçи тӳлеççĕ.

Дирекци. 3—1

Декабĕр уйăхĕн малтанхи вунăкунлăхĕнче Чăвашсен РВ—74 станци урлă обществăлăполитикăлă, музыкă, литературă тата ача-пăча передачисен

ПРОГРАММИ

(МУСКАВ ВАХĂЧĔПЕ)

2/XII. 16.00—16.28. Концерт: „ССР Союзĕнчи халăхсен йуррисемпе ташшисем".
19.30—19.58. „С. М. Киров" темăпа калаçу.

3/XII. 15.30—15.50. „Вĕренӳ правни Чăваш республикинче пурнăçа кĕни" темăпа Чăваш АССР Верховнăй Совет депутачĕ Харитонов йултăш тухса калани.
16.00—16.23. Музыка училищинче вĕренекен Хлебникова, Орлова тата Кириллов студентсен концерчĕ.
17.00—17.28. Ача-пăча передачи—„Хĕртĕ Çар йуррисем".
19.30—19.58. Агитаципе пропагандă секторĕн передачи—„ПСК(б)П Истории Кĕске курсĕ" (Х сыпăк).

4/XII. 16.00—16.28. Концерт. Грузин композиторĕсем çырнă оперăсен сыпăкĕсем (граммофон пластинки).
17.00—18.00. Шупашкар районĕнчи Шемшер йалĕнчен паракан передачă. Сталинла Конституци йачĕпе.
19.30—19.58. Агитаципе пропагандă секторĕн передачи—„Сталинла Конституци кунĕ".
21.00—21.58. Сталинла Конституци йачĕпе литература передачи.
22.00—22.58 Куславкка комбинатĕнчи стахановецсем панă заявка тăрăх концерт.

5/XII. 15.30—15.50. Чăваш АССР Верховнăй Совет депутачĕ Ахазин йултăш тухса калани.
16.00—16.28. Сталинла Конституци кунĕ йачĕпе концерт.
17.00—17.28. Ача-пăча передачи—„Вĕренӳ прави".

6/XII. 18.15—18.43. Литература передачи—„Некрасовăн пурнăçĕпе творчестви".
18.45—19.25. Иустици Халăх Комиссариачĕн коллективĕн художествăлă пултарулăх передачи.

7/XII. 16.00—16.28. Чăваш музыкин концерчĕ.
17.00—17.28. Ача-пăча передачи: Галич—„Великая дружба".
19.30—19.58. „ПСК(б) Парти Истории Кĕске курсĕ" (малали).
20.30—20.58. Литература передачи: Лидан—„Чжан—сын Ван Шина".

8/XII. 16.00—16.28. Классикла музыка концерчĕ.
19.30—19.58. „ПСК(б) Парти Истории Кĕске курсĕ" (малали).

9/XII. 16.00—16.28. Музыка училищинче вĕренекен студентсен концерчĕ.
19.30—19.58. „ПСК(б) Парти Истории Кĕске курсĕ" (малали).

10/XII. 19.30—19.58. Агитаципе пропагандă секторĕн передачи—«Что такое махаевщина».
21.00—21.58. Литературăпа музыка монтажĕ—„Орденлă Чăваш республикĕ".
22.00—22.58. Композитор-орденоносец Дунаевскин творчестви йачĕпе концерт. Концертра чăваш государствăлă филармонин хорĕ тата Ордовăпа Кисельова солисссем йурласа параççĕ.

Чăвашрадиокомитет.

БИБЛИОГРАФИ

Йалта мар—сĕм вăрманта

„Ĕçхĕрарăмĕ" журналăн 7-мĕш номерĕнче Мих. Беловăн нихăш йенчен те пиçсе çитмен „Йалта" йатлă пĕр пайлă драмă пекки пичетленсе тухнă. Çав асăннă пĕсăна тишкерсе тухнă хыççăн автăр илемлĕ произведени çырас ĕç çине çăмăлттайла пăхни, автăрăн культурăлăхпа политикă тĕлĕшĕнчен пĕлӳ сахалли питех те уççăн курăнать. Пĕсăн сӳжетне хăй пуçĕнчен шухăшласа кăларнă. Пĕсăра пулса пыракан действисем ача вăййи пек пулса иртеççĕ. Автăр час-часах хăй мĕн çинчен, кам çинчен çырма шутланине те манса ăташса кайать.

Ака, вылякансен йышне çеç тĕрĕслесе тухар-ха. Автăр каланипе вылякансем 9 çын: Ньага, Матен, Çимун, Удун, Леонид, учителницă, Татйан, Аньукка тата Сергей. Пĕсăна вуласа пынă çĕрте учителницăпа Аньукка икĕ çын маррине куратпăр епĕр. Çапла вылякансем 8 çын çеç пулмала пек. Анчах пырсан-пырсан тата икĕ вылякан—„старикпе" „сасă" сиксе тухаççĕ. Ĕнтĕ вунă çынна çитрĕ. Ку та тĕрĕс мар иккен. Пĕсăрта тата тирепе хупăрланă вылякансем нумай. Вĕсем мĕн пурĕ вуннăн та шутланма пултараççĕ. Çапла вара, пĕр пĕчĕк драмă пекки çинче 20 çын вылякансем пулса тăраççĕ. Автăр каланине вăл шут çинче комсомолецсем те пур тет те, епĕр вĕсене тупаймарăмăр.

Автăр вылякансен шутне çухатнă пулсассăн, пĕсăн сӳжечĕ пушшех те сĕмсĕрле.

Пĕсăра пулса пыракан ĕç 1929 çулта пулса иртет имĕш: Вăтам пуçĕсен çимун хăй килĕнче. Шурăмпуç çутăлса килнĕ вăхăт. Çав кас Çимун çĕр хутах хăй хĕрне Татйанна турра ĕненменшĕн вĕлерме шыраса çӳрет. Анчах ниçта тупайман пирки вĕлерейместĕр киле таврăнать. Хĕрĕ килте те çук. Çимун татах шырама тухса кайать. Ĕнтĕ хĕрне шырама мар, ывăлне, Леонида вĕлерме шутлать. Ывăлне вĕлерме Çимуна вилнĕ пуп тĕлĕкре курăнса хушнă иккен.

Мĕнрен çав терийĕх ухмаха тухса кайнă Çимун? Ун çинчен пĕсăра каласа памасть автăр, анчах Çимун темĕн таврăран сыхлама, ун хыççăнче тепĕр ывăлĕ Сергей тухса кайать.

Çав вăхăтрах Леонид таврăнать. Вăл ирхине ирех, учителницăпа çырăнма вулăса кайнă пулнă. Хальлĕнтĕ, шурăмпуç çутăлса килнĕ вăхăтра киле таврăнчĕ.

Те çĕрхутах ĕçленĕ вара унчухнехи вулăс та, ăна пĕр автăр çеç пĕлме пултарĕ, анчах 1929 çулта пирĕн республикăра вулăс пулманнине пионерсем те пĕлеççĕ.

Çапла вара, ирхине ирех вулăса кайнă Леонид, шурăмпуç çутăлса килнĕ çĕре киле таврăнсан, ăшшĕне кулак йенне сулăннăшăн кураймасть, хут те пĕсса тăрашпе Çимун кулаксем майлă пулса ним ĕç туни курăнмасть пулсан та.

Сасартăк урамра халăх чупни курăнса кайать. Кайран шав илтĕнет (?). Леонид урама чупса тухать. Сергей пурте чупса кĕрет. Колхоз амбарĕ çунать мĕн. Унчен те пулмасть, халăх Çимуна пуртне шăлаласа кĕрет. Колхоз амбарне Матен вут тĕртнине те пĕлеççĕ унта. Анчах Матене колхоз амбарне вут тĕртнĕшĕн мар, Леонидпа Ивана кураймашăн айăплаççĕ.

Леонидпа Ивана халăх мĕншĕн йуратни ниçта та паллă мар. Пĕсă тăрăх, Леонид мĕн пурĕ те хуларан килнĕ ача çеç. Тата учителницăна качча илет. Иван тĕнĕскерĕ ниçта та курăнмасть. Ку та сахал-ха. Халăх пĕртик шăвласа илсен, Мартен колхоз амбарне вут тĕртме Ньага хушнине тăрă шыв çине кăларать. Ньага текенĕ, автăр вылякансене палăртса çырнă çĕрте—кулак. Старик каланă тăрăх вăл—йĕрĕхçĕ. Мартен калаçа панă тăрăх, Ньага колхоза çиллессе вут тĕртме хушман вăрăх амбарне, Леонида кураймашăн вут тĕртме хушнă иккен. Мĕншĕн тесен, Леонид ăна йăмăкне качча илме чарнă.

Вăт, çавнашкал камĕ паллă мар Ньагана халăх алла илме шутласа тăнă вăхăтра Татйанапа Аньукка чупса кĕреççĕ. Вĕсене Çимун хуса килет. Халăх колхоз амбарĕ çунма пуçланнине те манчĕ ĕнтĕ, Çимунсен çемйи хушшинчи лару тăру ĕçне хутшанать. Çимуна йарса. тытса Аньуккана хĕнеме памаççĕ. Çав самантра Леонид кĕрет. Таçтан çавăрăнса çӳресе килчĕ ĕнтĕ вăл.

Леонид пурте кĕрсессĕн, автăр ашшĕне мылле çапăçтарма хатĕрлентерет. Леонида сул парççĕ. Çимунпе ывăлĕ халăх тытнă çĕртен ирĕк парат. Анчах тытăçăччен вăрăм пауза пулса иртет. Пауза хушшинче клоунсене сцена çине каларма хатĕрленĕ пек. Йехвен Çимуна патак парса ывăлĕ çине хĕтĕ парат. „Аньукка Леонида йалтах каласа ăнлантарат" (?).

Пауза пĕтсессĕн ашшĕпе ывăлĕ чăркашса кĕрсе кайаççĕ. Унччен те пулмасть Çимун Леонида пуçĕнчен патакпа çапса ӳкерет. А йунĕ, пичĕ-куçĕ çинче (!). Леонид кашт çеç вилсе кайаймасть. Ахăртех патакĕ пысăк пулнă пулмала.

Йулашкинчен вăтам хресчен „клас тăшманĕ" пулса тăрат.

„Йалта" текен пĕсă чĕлхе тĕлĕшĕнчен те тӳсме çук йапăх. Ака хăшпĕр тĕслĕхсене çеç илсе пырар.

Сергей. Есĕ йытă марла атте.

Удун. ..Леонид Аньуккапа, хĕрĕ Иванпа çырăнма кайнă.

Удун. Ех-ха-ха, пур иккен курмалисем. Ей, ачасем, чĕре тĕпне йун тултартăрла... тата ыттисем те.

Çапла, пур йенчен те тĕплĕн тишкерсе тухсассăн, ку пĕсăна йалти пурнăçа, илемлĕ литературăна пĕлсе курса мар, çĕм вăрманта хăй тĕллĕн аташса çӳрекен çын çырнă тесе калас килет. Писательсен правленийĕн „Йалта" пĕсăн автăрне çав вăрмантан часрах тухма, вăхăта иртермесĕр ĕçлĕ пулăшу пама тăрăшасчĕ.

Н. Мраньа.

Уполномоченнăй Чувашглавлита № 675. 16 Гос. Чебоксары, типографи № 1 Наркомместпрома ЧАССР, заказ № 332.0 1. 60X84 и к.